Н56
30864-чув



Национальная библиотека ЧР
4-030864



Возвратить книгу не позже
обозначенного здесь срока

ЗОЯ
НЕСТЕРОВА

# Ванюш курнă тĕлĕнтермĕшсем

ЮМАХ

Шупашкар
Чăваш
кĕнеке
издательстви
1987



ББК 84 Чув 7—4
Н 56

Кĕнекене
В. П. АВРАМЕНКО
илемлетнĕ

30864-чув.

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

ПРОВЕРЕНО
20

Н $\frac{4803010200—147}{М 136(03)—87}$ 89—87

Ӳкерчĕксем.

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1987 ç.



Мыскарисем пĕтĕмпех Ахванеç мучирен пуçланчĕç. Аякран пăхма типшĕм пĕчĕк старик çеç вăл. Çÿçĕ те, шĕвĕр сухалĕ те кăвакарнă, кĕлетки-çурăмĕ ватăлса кукăрăлнă. Çуллахи кунсенче е картишĕнче кăштăртатса çÿрет (тупать хăйне май ĕç), е урама тухса ларать.

Тĕлĕнмелле çын вăл, Ахванеç мучи. Ача-пăчана хăй патне чĕнсе илет те тытăнать халап çаптарма. Ĕненмелле мар япаласем çинчен хăй куçĕпе курнă пек каласа парать... Пĕррехинче вăл ачасене вăрманта çĕтерсе ярса йĕртнĕшĕн арçурие сухалĕнчен тытса силленĕ имĕш, тепринче ана çине пăрса çиме пынă вăрăм сухаллă пĕчĕк старикпе курса калаçнă... Питех те ăста Ахванеç мучи юмах яма. Ачасем шутсăр юратаççĕ ăна итлеме.

Ванюш та хăйĕн кÿршишĕн каççах каять. Туслă вĕсем. Тата кĕнеке вулама юратать Ванюш. Эх, ăçта кăна çитмеççĕ-ши, мĕнмĕн кăна курмаççĕ-ши вĕсем, кĕнекесенчи хăюллă, хастар çынсем! Йывăрлăх вĕсемшĕн нимĕн те мар, пархатарлă тĕллеве пурнăçлама нимĕнле хăрушлăх та чарайман. «Манăн çавсем пек пуласчĕ!» — час-часах шухăшлать ача. Анчах кĕнекери паттăрсем кĕнекерех юлаççĕ çав...

## 4

Тата акӑ мӗн... Ванюш шухӑшӗпе, Ахванес̧ мучи ахаль с̧ын мар. Асамс̧ӑ вӑл... Ырӑ асамс̧ӑ. Мучи хӑй кун с̧инчен, паллах, шарламасть. Анчах Ванюш пӗлет. Вӑл тахс̧анах тавс̧ӑрса илнӗ. Мӗншӗн тетӗр-и? Итлӗр эппин, каласа парам...

* * *

Пӗррехинче Ванюш ус̧ӑ чӳрече умӗнче кӗнеке вуласа ларатчӗ. Ӑнсӑртран унӑн хӑлхине амӑшӗн кӑмӑлсӑр сасси пырса кӗчӗ.

— Ванюш тетӗп! Илтместӗн-им пӑру макӑрнине? Хӑвӑртрах шӑвар. Шывӗ витрере. Карта с̧умне лартнӑ. Эпӗ ӗс̧е кайтӑп.

Ача пус̧не ирӗксӗррӗн с̧ӗклерӗ. Шӑп интереслӗ вырӑна вуласа с̧итнӗччӗ. Мур пӑрушӗ, тепӗр тесен.

— Юрӗ, юрӗ! Ан мӗкӗр! Халех! — мӑкӑртатса илчӗ Ванюш, алӑк патнелле утса.

Пахча хыс̧не кӑкарнӑ пӑрӑва шӑварсан, вӑл килне кайма тӑнӑччӗ. Ӑнсӑртран вӑрман с̧ине пӑхса илчӗ те тӑпах чарӑнчӗ. Ух, мӗнле вӑйлӑ с̧авраçил пӗтӗрӗнет! Хура тусан юпа пек тӳп-тӳррӗн пӗлӗтелле с̧ӗкленнӗ.

Ванюш вырӑнӗнче тепӗр ача пулсан, с̧апла вӑрахчен пӑхса тӑмастчӗ-и, тен. Мӗнех вара? С̧у кунӗсенче с̧авраçил сахал пулать-и? Анчах Ванюшӑн пур япалана та тӗплӗн тишкерсе пӗлес килет.

«Кунта вӑрман. Ун хыс̧ӗнче талккишпех симӗс с̧аран. Ӑс̧тан тупӑнчӗ вара с̧акӑн чухлӗ тусан?» — шухӑшласа илчӗ вӑл.

Сасартӑк — ак тамаша! — айӑн-с̧ийӗн пӑтранакан хура юпа ӑшӗнчен пысӑк мечӗк евӗр с̧ап-с̧утӑ япала вирхӗнсе тухрӗ. Кӑнкӑвак тӳпере шурӑ с̧улӑмпа ялкӑшса, самантрах кус̧ран с̧ухалчӗ.

— Мӗн пулчӗ вара ку? — шалтах хытса тӑчӗ Ванюш.— С̧ук, ку... ахаль с̧авраçил мар... Ку...

Ванюш урамалла чупрӗ. Мӗн курнине унӑн хӑвӑртрах юлташӗсене каласа парас килчӗ. Эх, тӗлӗнес̧с̧ӗ ӗнтӗ!.. Анчах с̧ывӑхра пӗр ача та курӑнмасть. Ахванес̧ мучи кӑна килӗ умӗнче, тенкел с̧инче, пӗр-пӗччен ларать.

— Ахванес̧ мучи, эсӗ нимӗн те курмарӑн-и? — пӑлханнипе пӳлӗне-пӳлӗне ыйтрӗ Ванюш.

## 5

— Мӗн пулчӗ? — терӗ лешӗ, ача ҫине тинкерсе пӑхса.

— Космос карапне куртӑм. Халӗ кӑна... Темиҫе минут каялла... Малтан эпӗ ҫавраҫил тесе... Анчах вӑл тусан пулман... Вӗсем ӑна юри ҫӳлелле ҫавӑрттарса хӑпартса янӑ... Карапне ҫынсем курасран...

— Мӗне ҫавӑрттарса янӑ? Камсем? — ыйтрӗ мучи ытла та лӑпкӑ сасӑпа.

— Паллах, пирӗн космонавтсем мар... Вӗсем пулсан, радиопа пӗлтернӗ пулӗччӗҫ... Кусем урӑх планетӑран...— Ванюш «вӗҫсе килнӗ ҫынсем» тесшӗнччӗ, анчах кӑштах шухӑшласа тӑчӗ те «вӗҫсе килнӗскерсем» тесе хушса хучӗ.

Темшӗн-ҫке ҫак хыпар Ахванеҫ мучие пӗрре те тӗлӗнтермерӗ. Ӗненмерӗ-ши?

— Пулӗ,— терӗ те вӑл сӑмаха пачах урӑх енне пӑрчӗ.— Атя-ха пӳрте кӗрер. Кунта ҫил вӗрет. Темӗн пилӗк ыратать-ха манӑн паян. Итлеме кӑмӑлу пулсан, юмах ярса парас тетӗп сана.

Старик туйи ҫине тӗренчӗ те йывӑррӑн тӑчӗ. Ванюш ун хыҫҫӑн утрӗ. «Мӗншӗн Ахванеҫ мучие ҫак хыпар пӗрре те тӗлӗнтермерӗ-ха? Тата мӗне кура вӑл ыйтмасӑрах юмах ярса паратӑп терӗ?» — шухӑшларӗ Ванюш.

Пӳрте кӗрсен, старик хыҫлӑ пукан ҫине ларчӗ.

— Эсӗ те лар,— терӗ вӑл, кукӑр туйине стена ҫумне сӗвентерсе.— Лӑплан. Кӗҫех пурне те пӗлӗн. Тӗпӗ-йӗрӗпех каласа парӑп. Анчах малтанлӑха юмах итле.

Ахванеҫ мучи, хуллен ӳсӗрсе илсе, калама тытӑнчӗ:

— Тахҫан ӗлӗкех пулнӑ ку. Ҫӗр ҫинче ҫавӑн чух икӗ паттӑр пурӑннӑ. Пӗрне — Ҫутӑ паттӑр, теприне Тӗттӗм вӑй тенӗ. Ҫутӑ паттӑр ырӑ, уҫӑ кӑмӑллӑ пулнӑ. Ҫынсене юратнӑ, пулӑшнӑ вӗсене, тӗрлӗ ӗҫе вӗрентнӗ. Хӑй те кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫленӗ. Ҫавна пула ҫутҫанталӑк кунран-кун илемленсе пынӑ. Темӗн чухлӗ йывӑҫ-курӑк ешернӗ, хитре чечексем куҫа савӑнтарнӑ, пахчаҫимӗҫ, улма-ҫырла ӳснӗ. Тӗттӗм вӑй хаяр та усал чунлӑ пулнӑ. Вӑл никама та юратман. Ҫынсене яланах асап, сиен кӳнӗ. Вӗсен куҫҫулӗ, хуйхисуйхи Тӗттӗм вӑйӑн сивӗ чунне савӑнтарнӑ кӑна. Ҫутҫанталӑк илемне вӑл чӑтма пултарайман, ӑна тӗрлӗ майпа яланах пӗтерме

тăрăшнă. Çавăнпа та икĕ паттăр хушшинче нихăçан та килĕшӳ пулман. Тĕттĕм вăй Çутă паттăра тĕп туса, çĕр çинче пĕр-пĕччен хуçа пулма ĕмĕтленнĕ. Çак шутпа пĕррехинче хăй тавра мĕнпур усал-тĕселе пуçтарнă та Çутă паттăра тапăннă. Нумай кĕрешнĕ вĕсем. Акă, Тĕттĕм вăй çĕнтере пуçланă. Çакна курса, Çутă паттăрăн пĕчĕк ывăлĕ, Хĕвел, тӳсеймен, ашшĕне пулăшма кăвак тӳперен кăлтăртатса чупса аннă. Ялтăртатса çунакан вĕри пайăркисене пĕрин хыççăн теприне Тĕттĕм вăй енне ывăтма тытăннă, пĕçертнĕ ăна, куçпуçне йăмăхтарнă. Анчах вăйлă тăшман тимĕр пек çирĕп чĕрнисемпе унăн ӳт-тирне чĕрмелесе илме ĕлкĕрнĕ-ĕлкĕрнех. Суранран ылтăн тĕслĕ çап-çутă юн тумламĕ юхса тухнă та çĕр çине ӳкнĕ. Каярахпа çав вырăнта хĕвел пек çутă, калама çук илемлĕ чечек шăтса ӳссе ларнă. «Хĕвел чечекĕ», «телей чечекĕ» тенĕ ун çинчен. Çынсем хушшинче сăмах çӳренĕ: çав чечеке ватă çын тупсан, çирĕп сывлăхлă пулĕ, вăйпитти çамрăкăн чи хаклă ĕмĕчĕ пурнăçа кĕрĕ, ача аллинче вăл, чăн-чăн хĕвел пулса, мĕнпур тавралăха телей парĕ. Нумай çын шыранă, тет, çав тĕлĕнтермĕш чечеке — тупайман. Пĕрисем, темиçе çул усăсăр çĕтсе çӳресе, каялла таврăннă, теприсем ĕмĕрлĕхех çухалнă... Тĕттĕм вăй чурисем сыхлаççĕ имĕш ун патне илсе каякан çула. Çав çул питĕ йывăр, хăрушă, теççĕ...

— Ахванеç мучи, эсĕ те пĕлместĕн-и вăл ăçта ӳснине?

— Пĕлместĕп,— пуçне суллать ватă çын.— Килтен тухсан, хăш еннелле утмаллине çеç чухлатăп.

— Апла пулсан, атя иккĕн каяр. Сан сывлăху начар, час-часах чирлетĕн. Тен, шыраса тупăпăр.

Старик кăмăллăн кулса ячĕ.

— Шеллетĕн апла ватă мучие? — терĕ вăл ăшшăн.— Çук, Ванюш, лайăх-и, начар-и, эпĕ хам ĕмĕре пурăнса иртternĕ. Хăвах шухăшла: çав чечек, хĕвел пулса, темĕн чухлĕ халăха телей пама пултарать пулсан, епле ăна пĕр ватă çын пурнăçĕшĕн татса илме хăяс?.. Ну, юрĕ. Авалхи халап çакăнпа вĕçленет. Малалла итле. Эсĕ паян космос карапĕ куртăм терĕн. Çапла-и?

— Ара, куртăм. Пĕр суймасăр калатăп. Чăн-чăн пионер сăмахĕ... Пăхса тăратăп çапла,— васкаса калама тытăнчĕ Ванюш.

— Эпӗ те куртӑм ӑна,— пӳлчӗ ӑна мучи.— Анчах халӗ мар... Ҫӗрле... Ку ҫеҫ те мар. Пӗринпе тӗл пулса калаҫрӑм...

— Кампа? — сиксе тӑчӗ Ванюш. Пӑлханнипе унӑн сывлӑшӗ питӗрӗнсе ларчӗ.— Урӑх планетӑран килнӗ ҫынпа-и?

— Ҫын евӗрлӗ мар вӑл,— терӗ мучи, хуллен ӳсӗрсе илсе,— анчах пирӗн пекех ӑслӑ-тӑнлӑ.

— Эх, курасчӗ манӑн ӑна. Ӑҫта вӑл?

— Хӑвах каларӑн-ҫке вӗҫсе кайрӗҫ тесе... Халлӗхе уйӑх ҫинче пулатпӑр, хӗвел чечекӗ пирки хыпар пулсан, унта пӗлтер, терӗҫ.

— Хӗвел чечекӗ? — тӗлӗнчӗ Ванюш.— Эсӗ халӗ каласа пани ҫавӑ-и?

— Ара. Шӑп ҫавӑн ҫинчен калаҫрӑмӑр та эпир унпа.

— Хӑҫан куртӑн вара эсӗ ӑна? Ӑҫта? Кам пек вӑл? Мӗнлескер? — тӗпчеме тытӑнчӗ ача.

— Лар-ха, лар. Итле, ан пӳл. Йӗркипех каласа паратӑп,— терӗ мучи лӑпкӑн.— Ҫапла, ачам. Ытла та тӗлӗнмелле тӗлпулу пулчӗ вӑл. Кӗтмен-туман ҫӗртен... Темшӗн ыйхӑ вӗҫрӗ кӗҫӗр,— мучи хуллен ӳсӗрсе илчӗ.— Аптранипе ир енне пахчана тухрӑм. Ларатӑп тенкел ҫинче. Сасартӑк тавралӑх ялтӑрт ҫуталса илчӗ. Пуҫа ҫӗклесе пӑхрӑм — йывӑҫсем хушшипе нимӗн те курмарӑм. Каярах пӗлтӗм вара: ҫав вӑхӑтра космос карапӗ ҫӗр ҫине вӗҫсе аннӑ иккен. Чылай лартӑм пахчара. Кӗрес тесе тӑтӑм ҫеҫ — пӑхатӑп: вӑрман енчен ман паталла темле ҫутӑ япала вӗҫсе килет. «Мӗн-ши ку?» — тесе шухӑшласа илтӗм кӑна — хайхи шӑп ман ума анса ларчӗ. Тинкерсе пӑхатӑп — чӗрчун! Пуҫӗ, хӳри кайӑкӑнни пек туйӑнать, кӗлетки, ҫуначӗ лӗпӗшӗн евӗрлӗ. Ҫерҫирен пысӑк, кӑвакарчӑнран пӗчӗкрех. Илемлӗ вара хӑй — куҫ илмелле мар. Ӑшӗнче электричество лампи ҫунать тейӗн, ялкӑшать анчах. Ҫунатне саркалать те — ун ҫийӗн тӗрлӗ тӗслӗ йӑлтӑр ҫутӑ выляса иртет. Тем каласшӑн пек, мана куҫран тинкерсе пӑхать. Тӗлӗннипе шак хытса лартӑм. Ҫак ҫула ҫитсе те ҫӗр ҫинче ун пек чӗрчун курман, пур тенине те илтмен, вуламан. Ҫапла кӗске вӑхӑт пӗр-пӗрин ҫине хускалмасӑр пӑхса лартӑмӑр. Юлашкинчен кӑштах тӑна кӗтӗм, калаҫса пӑхма шутларӑм ҫакӑнпа.

# 8

— Кам эсӗ? — тесе ыйтатӑп.— Ӑҫтан, мӗн тума кунта, ман ума, вӗҫсе килсе лартӑн?

Пуҫне кӑштах чалӑштарса, ҫак тӗлӗнмелле чӗрчун эпӗ каланине тимлӗн итлерӗ.

— Манӑн ҫӗршыв аякра,— терӗ вӑл чӗвӗлти сасӑпа.— Кунтан телескоппа пӑхсан та курӑнмасть. Ҫиши-ҫиш ятлӑ эпӗ пурӑнакан планета. Пире хамӑра ҫишсем теҫҫӗ. Хитреччӗ ман ҫӗршывӑм. Сад пахчи пекех. Мӗн-мӗн ӳсместчӗ-ши унта! Калаҫакан йывӑҫсем, юрлакан чечексем... Анчах сӳнет пирӗн хӗвел. Унпа пӗрле пуян ҫутҫанталӑк та, унӑн илемӗ те... эпир хамӑр та кӗҫех пӗтетпӗр...

Лӗпӗш ҫунатлӑ чӗрчун пуҫне хурлӑхлӑн усрӗ.

— Мучи,— терӗ вӑл,— эпир кунта хӗвел чечекӗ шыраса килтӗмӗр. Пулӑшмӑн-ши пире ӑна тупма?

— Мӗнле пӗлнӗ вӗсем ун ҫинчен? — ыйтрӗ ача.

— Ан та кала. Эпӗ те тӗлӗнтӗм,— терӗ Ахванеҫ мучи.— Эсир таҫта аякри ҫӑлтӑр ҫинче пурӑнатӑр,— тетӗп хайхине.— Хӗвел чечекӗ ҫинчен ӑҫтан пӗлетӗр? Епле майпа ҫав хыпар сирӗн пата ҫитме пултарнӑ?

— Пирӗн Ҫиши-ҫиш планета ҫинче калама ҫук ӑслӑ машинӑсем пур,— чӗвӗлтетрӗ хайхи чӗрчун.— Ҫавсем пӗлтерчӗҫ. Сирӗнпе, ватӑ юмах ӑстипе, калаҫса пӑхма та вӗсемех хушрӗҫ.

— Мӗн пулнӑ вӗсен хӗвелне? Ма сӳнет вӑл? — ыйтрӗ Ванюш.

— Усал тӑшмансем пӗтернӗ ӑна,— Ахванеҫ мучин куҫ харшийӗ ҫиллессӗн пӗрӗнчӗ.— Ҫиши-ҫиш планета питӗ пуян, калама ҫук илемлӗ пулнӑ имӗш. Ӗҫчен ҫишсем ҫутҫанталӑкпа туслӑ пурӑннӑ. Ӑна юратнӑ, упранӑ, тӗрлӗ чир-чӗртен сыхланӑ. Тата та пуянлатнӑ, илемлетнӗ. Кӳршӗ планета ҫинче пурӑнакансене ҫакӑ пачах килӗшмен. Кӗвӗҫнӗ вӗсем, ҫавӑнпа ӗҫчен ҫишсене тӗп тума шут тытнӑ... Пӗр ирхине пӑхаҫҫӗ лешсем — хӗвеле хуп-хура ҫӑра тӗтре карса илнӗ. Хирӗҫӳ-харкашу курман хаваслӑ халӑх мӗн пулнине тӑруках тавҫӑрса илеймен. Хура тӗтрене саласа, хуса яма пикеннӗ. Кӗтмен ҫӗртен ун ӑшӗнчен ҫӗлен пуҫлӑ хура кайӑксем вӗҫсе тухнӑ та тӳрех ҫишсем ҫине ыткӑннӑ. Хаяр ҫапӑҫу пуҫланнӑ. Ҫишсем хӑйсен ҫӗршывне, ҫутӑ



хĕвелне паттăррăн хўтĕленĕ. Усал тăшмана пуçĕпех çапса хуçнă. Унтан хĕвеле тĕтререн тасатма тытăннă. Анчах тăшман тĕтрене ахаль илсе пыман иккен. Кĕçех çутă хĕвел пĕрĕнме тытăннă, кунран-кун тĕксĕмленсе пынă. Ĕнтĕ вăл çутине те, ăшшине те çителĕклĕ парайман. Халăх хушшинче халиччен пĕлмен-илтмен темле чир сарăлнă. Пуринчен ытла вăл çамрăксене, ачасене пĕтернĕ. Хĕвел вăйĕпе ĕçлекен тĕрлĕ ăслă машинăсем пăрахăça тухнă. Йывăç-курăк хуралса тĕксĕмленнĕ, хăра-хăра ларнă. Планета çинче пурнăç ерипен сўнме пуçланă...

Тимлĕн итлесе ларакан Ванюшăн пичĕ-куçĕ салхулланчĕ.

— Ахванеç мучи, мĕншĕн хăйсем шырамаççĕ вĕсем хĕвел чечекне? Мĕншĕн сана пулăшма ыйтаççĕ?

— Авалхи халапра çав чечеке çĕр çинче пурăнакан çеç тупма пултарать тенĕ.

— Ахванеç мучи, эсĕ пулăшма пултăн-и çишсене? — хумханса ыйтрĕ Ванюш.

— Çук, шантарма хăяймарăм. Манран килет пулсан, эпĕ халех, пĕр тăхтамасăрах çула тухса кайнă пулăттăм. Анчах, чечекрен хĕвел пултăр тесен, ăна çамрăк ачан шыраса тупмалла-çке... Пĕр-пĕччен... Çапла каланă юмахра... Кам, мĕнле ача кайма килĕшĕ çавăн пек хăрушă йывăр çула?

— Эпĕ! — терĕ Ванюш çирĕп сасăпа.— Эпĕ каятăп.

Старик ун çине сăнаса пăхрĕ.

— Хăрамастăн-и? Унта халиччен пĕр çын та çитеймен... Шухăшларăн-и çакăн çинчен?

— Эсĕ ăнлантарса пар мана...

Мучи пĕр вăхăт чĕнмерĕ.

— Хĕвел чечекĕ халăх телейĕшĕн шăтса ўснĕ пулсан, ăна кам та пулин шыраса тупмаллах ĕнтĕ. Урăхла пулма та пултараймасть... Юрĕ, каясах тетĕн пулсан, пулăшма тăрăшăп. Çула тухиччен апат çиес теместĕн-и? Ну, чей ĕçсе кай эппин...

Хăй тĕллĕн тем мăкăртатса, старик чейнике шыв тултарчĕ те газ плити çине вĕретме лартрĕ. Пĕчĕк шкапран хутаç кăларчĕ, вĕтетнĕ темле типĕ курăка пĕр кашăк ăсса илсе, кружкăна ячĕ, унтан вĕрекен шывпа хутăштарчĕ. Кĕçех пўрте калама çук тутлă

шăршă сарăлчĕ. Пăсланакан куркине мучи Ванюш умне пырса лартрĕ.

— Акă сана чей. Ĕç те кайма пултаратăн. Тĕппипех ĕçсе яр, пĕр тумлам та ан хăвар... Ну, мĕнле? — ыйтрĕ вăл, пĕчĕк тусне куçран тинкерсе пăхса.

Ванюш ура çине тăчĕ, кăкăр тулли сывласа ярса, хулпуççине маттуррăн хускатса илчĕ, чышкине чăмăртарĕ.

— Вăй хутшăнчĕ, Ахванеç мучи,— терĕ вăл хаваслăн.— Эпĕ халĕ такама та, темле паттăра та çĕнме пултаратăп.

— Юрать. Кăтарт-ха апла вăйна. Çак сĕтеле кача пӳрнепе çĕклеме пултаратăн-и?

Сĕтелĕ пысăк, тапчам, урисем хулăн, тĕреклĕ. Ванюш ăна, мучи ыйтнă пек, кача пӳрни çине лартрĕ те çăмăллăнах пуç çийĕн çĕклерĕ.

— Лайăх, маттур,— терĕ мучи.— Халĕ кайма пултаратăн.

— Ăçта, хăш еннелле утмалла? — ыйтрĕ Ванюш, алăк хăлăпĕнчен тытса.

— Э-э, каламарăм-и вара эпĕ сана? Халлĕхе вăрмана кай. Ара, хамăр ял хыçĕнчи вăрмана... Çырма хĕрринчи сукмак çине тух та уттар малалла. Асту, ниçта та ан пăрăн. Çула куçран çухатсан, тупаймăн. Çĕтсе кайсан, пĕтетĕн.

— Çак пирĕн вăрманта-и? — тĕлĕнчĕ Ванюш.— Пĕчĕк вĕт вăл. Эпĕ унăн пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне канмасăр чупса тухатăп.

— Каях, ачам, вăхăт кĕтмест. Тепĕр хут астутаратăп: утмаçулран ан пăрăн, пĕр вырăнта вăрахчен ан тăр, темле ывăнсан та, канма ан лар, ан вырт, пĕтетĕн. Урăх нимĕнле канаш та пама пултараймастăп, нимĕнпе те пулăшаймастăп.

Ванюш çула тухрĕ. Кĕçех вăрмана кĕчĕ, ансăр сукмакпа малалла уттарчĕ. Çакăнти вырăнсене ачасем час-часах вылямa килеççĕ, анчах халĕ никам та çук. Шăп. Пырать Ванюш вăрманпа, васкасах утать. Вăхăт та хăй йĕркипе шăвать. Ача шутланă тăрăх, тахçанах вăрмантан тухмалла ĕнтĕ, анчах — тĕлĕнмелле! — унăн вĕçĕ-хĕррийĕ çук, утмассерен çăралса, тĕксĕмленсе пырать. Халиччен курман чăтлăхсем туха-туха тăраççĕ, тем пысăкăш йывăççем çула пӳле-пӳле хураççĕ.

«Тĕттĕм паттăр çĕрĕ пуçланчĕ пулас»,— шухăшларĕ Ванюш, йĕри-тавра пăхкаласа. Чăнах та, килтен тухнă чух хĕвел çӳлтеччĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ, çанталăк тĕттĕмленчĕ. Каç пулчĕ. Тӳпере уйăх та, çăлтăрсем те курăнмаççĕ. Хура пĕлĕт кăна явăнать. Çĕр çийĕн тĕттĕм шăвать, тавралăха хупăрласа пытарать.

Халиччен пулман-курман сĕм вăрманта çамрăк ача пĕр-пĕччен пырать. Чунĕ çӳçенет унăн, каялла, килелле, çавăрăнса утас килет. Анчах юрамасть апла тума. Тем пулсан та, хĕвел чечекне шыраса тупмаллах... Çăлас пулать пĕр айăпсăр асапланакан çиш халăхне.

Сасартăк, вăрман шăплăхне пăсса, такам асаплăн йынăшса ячĕ. Ача тăпах чарăнчĕ. Тимлĕн итлерĕ. Темле ăнланмалла мар сасăсем хăлхана пырса кĕчĕç: те вăрăм курăк чăштăртатать, те кайăк çуначĕсене вăшлаттарса вĕçет.

— Ой, пĕтеççĕ! Пĕтеççĕ! — илтĕнчĕ çывăхрах сасă.— Кам пур кунта? Çăлăр! Пулăшăр!

Сукмакран пăрăнма юраманни çинчен манса, Ванюш сасă енне ыткăнчĕ, умри чăтлăха сирсе, пысăк уçланка сиксе тухрĕ.

— Ăçта? Кама пулăшмалла? — ыйтрĕ вăл, унталла-кунталла пăхкаласа.

— Авă! Авă! Тăмана çĕр çийĕн вĕçет! Курăк хушшине пытаннă айван ачамсене шырать. Хăй йăвине йăтса каясшăн. Çисе ярасшăн.

Пăхать Ванюш — умрах мулкач тăрать, тархаслать, тилмĕрет, йăлăнать.

«Мулкач çын чĕлхипе калаçать, апла эпĕ чăннипех юмах çĕршывĕнче иккен»,— шухăшласа илчĕ Ванюш. Вăл тĕттĕмелле темиçе утăм ярса пусрĕ, вара инçе те мар, çуначĕсене сарса, васкамасăр çĕр çийĕн вĕçекен пысăк кайăка курчĕ.

— Ах, усал! — терĕ ача.— Акă эпĕ сана! Кша-а! — вăл ура айне пулнă типĕ турата çĕклерĕ те ăна çаткăн кайăк енне вăркăнтарчĕ. Тăмана çӳлелле çĕкленчĕ, анчах тăруках вĕçсе каймарĕ. Лайăхрах курас тенĕ евĕр, ача пуçĕ çийĕн çавăрăнма тытăнчĕ.

— А-а, Ванюш! Пăрăнтăн апла сукмакран! Халĕ ĕнтĕ тупаймăн! Инкек кĕтет сана! Инкек! Ха-ха-ха! Хо-хо-хо! — хăрушшăн

ахăлтатса ячĕ вăл. Вара, çирĕп çуначĕсене вăшлаттарса, вăрман тĕттĕмĕнче çухалчĕ. Çĕрлехи шăплăхра унăн уçă сасси нумайччен чуна çӳçентерсе, янраса тăчĕ.

«Сукмак! Ăçта вăл?» — Ахванеç мучи асăрхаттарнине аса илсе, Ванюш каялла тапса сикрĕ, унталла-кунталла чупкаларĕ, тĕттĕм çĕр çине куç ыратакан пуличчен тинкерсе пăхрĕ, шырарĕ, анчах тупаймарĕ.

Ăçта каймалла ĕнтĕ халĕ? Хăш еннелле утмалла? Ах, вăрман, тĕттĕм сĕм вăрман! Кăшт та пулин çутăлсам. Ан пытар Ванюшран сукмака! Анчах хура вăрман шăпăрт. Вăл чĕнмест, хускалмасть.

Хăраса ӳкнĕ ача кĕç-вĕç йĕрсе ятрачĕ, çав самантра ун умне каллех мулкач сиксе тухрĕ.

— Тавтапуç сана, Ванюш, ман ачасене хаяр вилĕмрен çăлнăшăн,— терĕ вăл.— Сукмака çĕтертĕм тесе ан кулян. Кунтах вăл, инçе мар. Атя кăтартам, ут ман хыççăн.

Нумай та каймарĕç, мулкач чарăнчĕ.

— Акă, куратăн-и? Ăсатса ярăттăм сана, анчах йĕри-тавра тем тĕрлĕ хăрушлăх. Çурасем ытла та айван. Сывă пул! — мулкач сикрĕ те самантрах куçран çухалчĕ.

Утать Ванюш кукăр-макăр ансăр çулпа, васкасах утать. «Хăçан вĕçленĕ-ши ку вăрман? Хăçан кăшт та пулин çутăлĕ-ши?»— шухăшлать вăл, йĕри-тавра пăхкаласа. Анчах тĕттĕмлĕх çăралсах пырать. Ĕнтĕ виçĕ-тăвата утăмрах нимĕн те курăнмасть. Пысăк йывăç вуллисем, юмахри усал чĕрчунсем пек, ача умне туха-туха тăраççĕ. Вĕсен çирĕп турачĕсем, такамăн кукăр-макăр аллисем пек, пит-куçран çапса ыраттараççĕ, тумтиртен çаклата-çаклата туртаççĕ. Çĕлен евĕр авкаланса выртакан пысăк тымарĕсем такăнтаратакăнтара яраççĕ. Акă сукмак та аран-аран палăрать. Çĕтсе кайма нимĕн те мар...

Кĕтмен çĕртен çанă çине çап-çутă лĕпĕш пырса ларчĕ.

— Ванюш, хăтар вилĕмрен! Мана тăшман хăвалать,— илтрĕ ача çинçе, ачаш сасă.— Хăвăртрах! Кунтах вăл!

Пĕчĕк лĕпĕше Ванюш алă тупанĕпе хупларĕ. Çав самантра вăрман тĕттĕмĕнчен вăрăм сăмсаллă пĕр кайăк вĕссе тухрĕ. Темĕн

шыраса, унталла-кунталла ывтӑнчӗ, ача тавра вӗҫе-вӗҫе ҫаврӑнчӗ. Вара каллех ҫӗрлехи тӗттӗмре ҫухалчӗ.

— Тавтапуҫ. Эсӗ мана вилӗмрен ҫӑлтӑн,— терӗ лӗпӗш.— Пултарнӑ таран эпӗ те сана пулӑшма тӑрӑшӑп. Кала, мӗн кирлӗ?

— Ҫак сукмак куҫран ан ҫухалтӑрччӗ,— ыйтрӗ Ванюш.

— Юрӗ,— лӗпӗш сывлӑша ҫӗкленчӗ.— Кӗт. Эпӗ халех.

Унччен те пулмарӗ, ача патне, хӗлхем евӗр ялкӑшса, темиҫе пин пӗчӗк ҫутӑ вӗҫсе ҫывхарчӗ. Ҫутӑсем ҫавӑрӑнчӗҫ те ҫавӑнтах куҫран ҫухалчӗҫ. Пӑхать Ванюш: сукмак икӗ енӗпе те таҫта ҫитиех ҫап-ҫутӑ пӑнчӑсем ларса тухнӑ. «Тӗттӗмре ҫутӑлакан хурткӑпшанкӑ. Мӗн чухлӗн вӗсем!.. Маяксем пекех»,— савӑнса шухӑшларӗ Ванюш, хӑюллӑн малалла утса.

Каҫӗ ытла та тӗттӗм пулни сахал, тавралӑха хура тӗтре карса илчӗ. Халӗ Ванюш хӑй урине те аран-аран курать. Ҫакӑн пек чух йӗп чиксен те куҫ курмасть теҫҫӗ пулӗ ӗнтӗ. Телее, умра пӗчӗк маяксем ҫуталаҫҫӗ, ҫӗтсе каясран хӑрамалла мар. Утать Ванюш, васкасах утать...

«Чок! Чок!» — пырса кӗчӗ хӑлхана сасӑ. Пӑхать ача: умрах, йывӑҫ турачӗ ҫинче, пакша ларать. Ванюш чарӑнчӗ кӑна, пӗчӗк пакша малти урисене ун енне тӑсрӗ.

— Усал ача ман урана чулпа персе амантрӗ,— терӗ вӑл.— Утаймастӑп халӗ, сикейместӗп, хама валли апат тупаймастӑп. Виҫӗ кун ӑша пӗр хӗлхем яман. Ҫурасем те выҫӑ, йӗреҫҫӗ. Ырӑ Ванюш, ҫӑл вилӗмрен. Мӗн те пулин ҫимелли тупса пар!

Ах, ытла та шел пӗчӗк пакшана! Анчах мӗн тупӑн ҫакӑн пек тӗттӗмре? Мӑйӑр йывӑҫҫи те, ҫырла-кӑмпа та курӑнмасть.

Телее, пиншак кӗсйинче виҫӗ печени пур. Тӑруках хырӑмӗ выҫса кайнине туйрӗ пулин те, ача вӗсене пакшана тӑсса пачӗ.

— Тавтапуҫ,— терӗ лешӗ, кучченеҫе илсе.— Кунпа пӗр хушӑ пурӑнатӑп ӗнтӗ. Унччен ура сывалать. Ырӑ тунӑшӑн сана та ырӑпа тавӑрма тӑрӑшӑп. Эсӗ пырас сукмак ҫинче, кунтан инҫе мар, ҫӗрӗк йывӑҫ ишӗлчӗкӗ ҫуталса выртать. Пӗр татӑкне, чи ҫуттине, суйласа ил те кӗсйӳне чик. Йывӑр килсен, кирлӗ пулӗ. Сывӑ пул! — пӗчӗк пакша ҫапла каларӗ те хӑйӗн йӑвине кӗрсе куҫран ҫухалчӗ.



Ванюш малалла утрĕ. Акă вăл, хайхи йывăç ишĕлчĕкĕ. Тĕттĕмре аякранах курăнать. Хăшпĕр йывăç çĕрнĕ чух çавăн пек çуталма пултарнине Ванюш пĕлет — вуланăччĕ ун çинчен. Вăл, пакша хушнă пекех, пĕр татăкне суйласа илчĕ те пиншак кĕсйине чикрĕ. Нумай утрĕ-и, сахал-и — чарăнчĕ. Ăçта кайса çухалчĕç пĕчĕк маяксем? Умра каллех пăч-тĕттĕм, каллех нимĕн те курăнмасть...

Ача çанни çине каллех çап-çутă лĕпĕш пырса ларчĕ.

— Каçар, Ванюш, эпир тек санпа пыма пултараймастпăр,— терĕ вăл.— Вилĕм кĕтет пире унта... Сывă пул!

Ак тамаша! Мĕн тумалла ĕнтĕ халĕ? Пĕр вырăнта нумай тăма юрамасть. Ахванеç мучи асăрхаттарнăччĕ. Анчах утма та хăрушă, каллех сукмакран çĕтсе кайма пулать... Аптранă ача пĕр ури çинчен теприн çине пускаласа илчĕ... Ах, ытла та ыйхă килет. Куç хупаххи çине темле йывăр япала çакса янă тейĕн, хăех хупăнать... Мĕнпур шăмшак шалтăрах кайрĕ. «Çапла, Ахванеç мучи хушмарĕ выртма... Ну... Эпĕ кăштах... Кăшт çеç... Çакăнта, пысăк йывăç айне, пиншак саратăп та... Анчах мĕн унта, кĕсъере?.. Выртма чăрмантарать. Э-э, пакша парни-çке... Мĕн усси унран? Кăларса ывăтмалла çеç»,— сӳрĕккĕн шухăшларĕ ыйхăллă ача. Вăл пиншак кĕсйинчен хайхи йывăç татăкне кăларчĕ. Пăхрĕ те тĕлĕннипе ахлатсах ячĕ... Çĕрĕк йывăç мар-çке ку... Ку — хунар!.. Светофор пекех, виçĕ тĕслĕн çутатать... Акă хĕрлĕ çутă ялтлатрĕ, унтан сарри çуталса сӳнчĕ, вара симĕс тĕсли ялкăшса çунма тытăнчĕ. Ой, тĕлĕнтермĕш! Тавтапуç сана, ырă пакша, хаклă парнешĕн! Ĕнтĕ ыйхăллă пĕтĕмпех иртсе кайрĕ. Ванюш ура çине çăмăллăн сиксе тăчĕ. Симĕс тĕс çул уçă, кайма юрать тенине пĕлтерет пулас. Унталла-кунталла авкаланса выртакан ансăр сукмакпа Ванюш каллех малалла васкаса утрĕ... Тĕттĕм чурисем ăна малтан сукмакран çĕтерсе, унтан çывратса ярса пĕтересшĕн пулчĕç. Çук, вĕсем шутланă пек пулмарĕ. Çанталăк çутăлтăр кăна, тупать Ванюш хĕвел чечекне, пурпĕрех тупать. Ача çапла хавхаланса пыратчĕ. Сасартăк хунарта симĕс çутă сӳнчĕ, малтан сарри, ун хыççăн хĕрли çуталчĕ. Çакна курсан, Ванюш тăпах чарăнчĕ. «Ахальтен мар ку. Умра темле хăрушлăх пур пулас»,— шухăшларĕ вăл. Лĕпĕш те асăрхаттарнăччĕ.

Хунарĕпе йĕри-тавра çутатса, ача пур еннелле те тимлĕн пăхса çаврăнчĕ. Нимĕн хăрамалли те çук. Никам та курăнмасть. Инçе те мар ватă юман ÿсет. Тымарĕсем тавраллах сапаланнă, çиелтех выртаççĕ. Пĕри ытла та пысăк, вăрăм тата темшĕн яка. Хунар çути ун çине ÿксен, хайхи тымар сасартăк хускалчĕ, авкаланса илчĕ. Акă япала!.. Ванюш тата тинкеререх пăхрĕ. Çĕленçке ку! Ун çулĕ çинче пысăк хура çĕлен выртать! Хускалман пулсан, асăрхас та çук. Ăçтан каймалла ĕнтĕ халĕ? Юманăн пĕр енче çÿллĕ сăрт, тепĕр енче тарăн çырма. Çĕлен пуçĕ вĕсен хушшинче, чи ансăр вырăнта. Акă вăл çĕкленчĕ, ялкăш çутта тÿсеймесĕр, кăмăлсăррăн сулкаланса илчĕ.

— Кам çапла алхасма хăять кунта, ман çывăхра? — сивĕ куçне ача çине тĕллерĕ тăшман.— Ма чĕнместĕн? Е хăранипе чĕлхÿ çĕтрĕ-и? — чашкăрчĕ вăл хаяррăн.— Халех кала, кам эсĕ?

— Ванюш,— терĕ ача, хунар çутине ун çинчен илмесĕр.

— Ваню-у-уш! — тăсрĕ çĕлен тĕлĕннĕ сасăпа.— Эпĕ сана улăп пекех тĕреклĕ тесе шутланă. Эсĕ вара,— вăл каласа пĕтереймерĕ, сиввĕн ахăлтатса кулса ячĕ.— Кил, кил, ан хăра... Тивместĕп... Итлеместĕн-çке эсĕ... Юрĕ, хам пыратăп эппин. Çывăхран курас килет сана... Çавăнтах тăр. Ан хускал...

Ункăн-ункăн авкаланса, çĕлен вăрăм кĕлеткине пĕр вырăна пуçтарчĕ.

— Асăрхан! — илтĕнчĕ хыçра пăлханнă сасă.

Ванюш каялла сикрĕ кăна, шăп вăл тăнă вырăна çĕлен пĕтĕм кĕлеткипе лаплатса ÿкрĕ.

— Ах, эсĕ апла иккен. Тăхта, вĕрентем сана путсĕрленме!

Ванюш чышкисене чăмăртарĕ, унăн пĕтĕм шăмшакĕ тăрăх çав тери хăватлă вăй чупса саланчĕ. Ача çĕлен пуçне урипе пусса лапчăтасшăнччĕ, анчах лешĕ çĕкленме ĕлкĕрчĕ, хăрушшăн чашкăрса, Ванюш енне туртăнчĕ, ун пичĕ тĕлĕнчех унталла-кунталла сулланса илчĕ.

— Пăх мана куçран! Куçран пăх, тетĕп! — илтĕнчĕ çиллес сасă.

— Ан пăх, Ванюш! Пĕтетĕн! — чĕвĕлтетрĕ хыçра тепĕр сасă.

— Хăрамастăп эпĕ сан куçунтан! — кăшкăрчĕ ача, хунар çутине çĕлен пуçĕ çине тĕллесе.— Эсĕ ху манран хăра!

30864-чув
Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА

Хěрлě çутă тата та хытăрах ялкăшма тытăнчě. Вут-хěм тухать, тăшман çине сирпěнет. Йăмăх çутта çěлен тӳсеймерě, пуçне аякка-лла пăрчě. Çав самантра Ванюш ăна ěнсинчен çавăрса тытрě.

— А-а-а, Тěттěм паттăр чури! Лекрěн-и? — терě вăл. Ух, ытла та вăйлă иккен усал тăшман! Мěнпур кěлеткипе авкаланса, вăл ача аллинчен çăлăнма тăрăшрě, çирěп хӳрипе çапа-çапа, ăна ура-ран ӳкерме хăтланчě.

— Телей чечекě патне каяс тетěн-и? Çук, ямастăп! Халиччен унта пěр çын та çитеймен! Авă выртаççě вěсен, хěвел чечекě шыракансен, шăммисем çырма тěпěнче. Сана та пěтеретěп, эсě те унтах пулатăн,— хаяррăн хăйăлтатрě çěлен.

Ванюш хунарне пиншак кěсйине чикрě те тепěр аллипе тăш-мана авкаланса çапкаланакан хӳринчен ярса тытрě. Çӳле çěклесе, мěнпур вăйран çěре çавăрса çапрě.

— Акă сана!

Лешě пěр вăхăт хускалмасăр выртрě, унтан, йывăр аманнă-скер, пысăк кěлеткине аран-аран сěтěрсе, тарăн çырмана шуса анса кайрě.

Шăнкăртатса выртакан çăлкуç умěнче Ванюш аллине çуса та-сатрě, çамки çинчи тарне шăлса типěтрě... Анчах кам систерчě-ха ăна хăрушлăх çинчен? Кам «асăрхан!» тесе кăшкăрчě?

— Эпě,— илтěнчě сасă.

Хунар çути йывăç турачě çинче ларакан пěчěк кайăк çине ӳкрě.

— Кăсăя-çке. Мěншěн эсě йăвара мар? Ма çывăрмастăн?

— Хуйхă манăн, Ванюш. Çавна пулах ыйăха çухатрăм,— терě кайăк салхуллă сасăпа.— Инкеке, кăçал эпě çак йывăç çинче йăва çавăртăм. Чěппěмсем кăштах ӳсрěç çеç, çак усал çěлен юман хăвăлěнчен шуса тухрě те пурне те çисе ячě,— йěре-йěре каларě кăсăя.— Мěн чухлě асап, сиен кӳмест пулě вăл таврара пурăна-кансене! Тěрлě майпа: хăратса, улталаса, астарса — хăй патне чěн-се илет те пěрне те чěррěн хăвармасть. Пěр чун та юлмарě ěнтě çывăхра. Пурте: тискер кайăк та, кайăк-кěшěк те, хурт-кăпшанкă та — аякранах пăрăнса тараççě. Эпě, айван, ěненмерěм асăрха-ттарса каланине,— кайăк каллех йěрсе ячě.

«Çавăнпа манăн пĕчĕк «маяксем» тăруках çухалчĕç иккен»,— ăнланса илчĕ Ванюш.

— Тавтапуç сана çав путсĕре çĕнтернĕшĕн. Тек ашкăнаймĕ. Тулчĕ шăпи. Акă, тыт,— кăсăя, кăкăрĕ çинчен çăмăл тĕк туртса кăларса, ăна Ванюша пачĕ.— Ан çухат. Йывăр килсен, манăн пĕчĕк парнене аса ил. Сывă пул. Ăнăçлăх сунатăп!

Ванюш кайăка тав турĕ те, хунарĕпе çутатса, малалла утрĕ. Нумай кайрĕ-и вăл, сахал-и, çанталăк çуталма пуçларĕ. Тавралăха чаршав пек хупăрласа тăракан çăра тĕтре саланса курăнми пулчĕ. Хура пĕлĕт вакланма тытăнчĕ. Унтан, такамран хăранă евĕр, васкаса шуса, тĕрлĕ енне кайса çухалчĕ. Пуç тăрринче таса тӳпе курăнчĕ. Сĕм вăрман та сайраланса пычĕ. «Вĕçленчĕ пулас Тĕттĕм паттăр çĕршывĕ. Тул çутăлать. Çитрĕм пулĕ ĕнтĕ хĕвел чечекĕ патне»,— хавасланчĕ Ванюш. Акă вăл вăрмантан тухрĕ. Инçетре, çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ тĕлте, хĕвел çаври ялкăшать. Вăраннă вăрман, симĕс турачĕсене хускатса, хуллен шавлать. Йĕри-тавра хаваслă кайăк юрри илтĕнет...

Анчах савăнăç, пĕлĕтсем хыçĕнчен шăвăнса тухнă хĕвел пайăркиевĕр, йăлкăшса илчĕ те каллех çухалчĕ. Пăхрĕ те Ванюш — хăраса кайрĕ. Умра пырса кĕме çук шурлăх сарăлса выртать иккен. Таврара урăх нимĕн те курăнмасть. Таçта аякра, чĕлтĕр кăвак тĕтре хыçĕнче, пысăк мар сăрт пĕр-пĕччен мăкăрăлса ларать.

«Çавăнта мар-ши телей чечекĕ? — терĕ Ванюш, инçете тинкерсе пăхса.— Анчах мĕнле каçас çак шурлăх урлă? Эх, вертолет вĕçсе килесчĕ!» — ача çапла шухăшларĕ кăна — аса илех кайрĕ: ара, кăсăя ăна хăй тĕкне пачĕ-çке. «Йывăр килсен — пулăшĕ»,— терĕ. Акă вăл, кайăк парни. Анчах мĕнле пулăшма пултартăр-ха ăна çак пĕчĕк тĕк? Ванюш ăна алла илчĕ çеç — таçтан килсе тухрĕ-çке çав самантра аскăн çил — çăмăл тĕке çĕклерĕ те çӳлелле çаврăнса вĕçтерсе кайрĕ. Ах, инкек! Ванюш шурлăх хĕррипе унталла-кунталла чупкаларĕ, куç шарса кайиччен тӳпенелле тинкерсе пăхрĕ. Анчах мĕн усси? Ăçта тупатăн кунта çав пĕчĕк япалана? Пĕлнĕ пулас ăслă кайăк Ванюшăн çул-йĕрне. Шурлăх урлă каçма пулăшас тенĕ ĕнтĕ вăл. Çавăнпа парнелерĕ кăкăр çинчи тĕкне...

Малалла кайма ҫул ҫук. Нивушлĕ ҫакăн чухлĕ асапланса ҫӳрени ахалех пулчĕ? Ҫĕнтерчĕ ăна Тĕттĕм паттăр. Пĕтеҫҫĕ ĕнтĕ лĕпĕш ҫунатлă чипер ҫишсем...

Сасартăках ывăннине туйса, Ванюш ларчĕ. Йĕрес килнине путарса, питне аллисемпе хупларĕ. Хăлхара темле шăв-шав янăрать: те ҫил улать, те вăрман кашлать, те... таҫта ҫӳлте мотор кĕрленĕ пек туйăнать... Ача пуҫне ҫĕклерĕ, хăй мĕн курнине ĕненмесĕр, куҫне сăтăркаласа илчĕ, унтан сиксе тăчĕ. Таса тӳпере темле машина ҫавăрăнать... Ой! Шăп Ванюш тăнă ҫĕрех анать. Акă, ураписем ҫĕре перĕнчĕҫ!.. Мĕнле машина вара ку? Самолет пек мар. Вертолет та мар. Кӳлепи те, ҫуначĕсем те кайăкăн евĕр. Э-э, пурпĕрех мар-и? Шурлăх урлă каҫартăр ҫеҫ! Ванюш пĕчĕк машина ҫине вăрт-варт кĕрсе ларчĕ, педалĕсене пусрĕ, рульне ҫавăркаларĕ.

— Хĕвел чечекĕ патне кайăпăр! — терĕ вăл. Тĕлĕнтермĕш машина каллех хуллен кĕрлеме тытăнчĕ, ҫĕкленчĕ те, шурлăх ҫийĕн вĕҫсе, аякри сăрт енне ҫул тытрĕ. Кĕҫех шурлăх та хыҫала юлчĕ. Умра хайхи пĕчĕк сăрт. Машина ун йĕри-тавра вĕҫсе ҫаврăнчĕ те тикĕс ҫĕр ҫине анса ларчĕ.

Тĕме симĕс курăкпа витĕннĕ. Хĕвел чечекĕ чăннипех ҫакăнта ӳсет пулсан, ăна таҫта ҫĕр айĕнче шырамалла пулĕ.

Чим, пĕр енче пысăк чул катăкĕ курăнать. Ишĕлекен ҫĕрпе ҫурри таранах витĕннĕ. Ванюш ăна хуллен тĕртсе пăхрĕ — хускалмасть. Урипе тапрĕ — чул муклашки кăштах тайăлчĕ. Мĕнпур вăйран виҫҫĕмĕш хут тĕксен, чул аяккалла йăванса кайрĕ. Акă хайхи! Ун хыҫĕнче пĕчĕк алăк курăнчĕ... Ванюш алăк хăлăпĕнчен тытса туртрĕ — уҫăлмасть.

Шаккарĕ.

— Кам унта? — илтĕнчĕ сасă.

— Ванюш,— терĕ ача, чĕри хаваслăн кăртлатса илнине туйса.

— Мĕн кирлĕ? — ыйтрĕ каллех сасă.

— Хĕвел чечекĕ.

— Манăн ылтăн-кĕмĕл нумай.

— Мана хĕвел чечекĕ кирлĕ.



Алăк хыçĕнче сас-хура илтĕнмерĕ.

Ача каллех шаккарĕ.

— Кам унта?

— Ванюш.

— Мĕн кирлĕ?

— Хĕвел чечекĕ.

— Манăн тĕрлĕ хаклă чул темĕн чухлех.

— Эпĕ хĕвел чечекĕ патне килнĕ.

Каллех шăпăрт.

Ача виççĕмĕш хут алăка тӳнлеттерчĕ.

— Кам унта?

— Ванюш.

— Мĕн кирлĕ?

— Хĕвел чечекĕ.

— Мĕн тума?

— Инкеке лекнĕ туссене пулăшма.

— Апла пулсан, кĕр.

Алăк йывăррăн нăтăртатса уçăлчĕ. Пăхать Ванюш — çурма тĕттĕм пӳлĕмре пĕчĕк старик тăрать. Çăпатапа, тĕрленĕ шурă кĕпепе. Пилĕкне ярапаллă йăмăх пиçиххи çыхнă. Сухалĕ шап-шурă, урайне кăшт çеç перĕнмест. Тĕлĕнмелле старик аллине кăкăрĕ çине хучĕ те пуçне çĕрелле тайрĕ.

— Хапăл тусах кĕтетĕп сана, Ванюш паттăр!

— Кам эсир? Мĕн тăватăр кунта, çĕр айĕнче? — ыйтрĕ Ванюш, пĕчĕк çын çине тĕлĕнсе пăхса.

— Э-э, никамах та мар. Леш, авалхи юмахсенче тĕл пулакан Чике старик эпĕ. Илтнĕ пулĕ. Тахçантанпах çакăнта пурăнатăп. Телей чечекне сыхлатăп. Тĕттĕм чурисем курайманçĕ ăна. Тĕп тăвасшăн çунса çӳреççĕ. Пĕрре кăна мар тытса илме хăтланчĕç. Çăмăл пулмарĕ упрама. Çавăнпа сана вăр-вар кĕртме шиклентĕм. Килессе пĕлнĕ пулин те, малтан тĕрĕслесе пăхас терĕм.

— Эсир пĕлнĕ-и вара эпĕ килессе?

— Çапла, хыпар пулчĕ. Кунта пирĕн хамăрăн çыхăну... «Телей чечекне тупас текен нумай пулĕ, анчах Ванюш паттăр кăна çитме пултарать ун патне»,— терĕç. Тĕрĕс каларĕç... Паян манăн уяв...

Хĕвел чечекĕ кĕçех ирĕке тухĕ. Чăн-чăн хĕвел пулса ялкăшĕ, çуталĕ, ăшăтĕ! Телейсĕрсене телей парĕ!— терĕ Чике старик хаваслăн.— Паянтан эпĕ те ирĕклĕ ĕнтĕ.

— Ăçта вăл? Хăш вырăнта ӳсет? — ыйтрĕ Ванюш, йĕри-тавра пăхкаласа.

— Ан васка. Пурин те хăйĕн вăхăчĕ, хăйĕн йĕрки пур... Ун патне çитме çичĕ алăк уçас пулать. Çичĕ хут, пусма лартса, аялалла анас пулать. Çичĕ пӳлĕм витĕр тухас пулать. Вара тин курăн хĕвел чечекне... Атя кайăпăр. Чим, малтан хăйă çутам-ха... Алăкĕ кунта. Тинкерсе пăхмасан, кураймастăн та. Акă, уçăлчĕ. Ут ман хыççăн... Хĕсĕкрех пулĕ те-ха сана кĕрсе тухма...

Çапла калаçкаласа, вĕсем васкамасăр çĕр тĕпнелле анчĕç.

— Çитрĕмĕр,— пăшăлтатрĕ вăл юлашкинчен.— Çак алăк хыçĕнче вăл... Ну, уçатăп...

Чи малтан куçа ялкăш çутă йăмăхтарчĕ. Хумханнă Ванюш, пӳлĕме кĕме манса, алăк янахĕ çинче хытса тăчĕ. Акă вăл, телей чечекĕ! Умрах! Хĕвел пек ялкăшса ларать. Сăмах çитмест унăн илемĕ çинчен каласа пама.

Çитрĕ чунтан кĕтнĕ самант! «Асапланса çӳрени ахаль пулмарĕ»,— савăнса шухăшларĕ Ванюш, телей чечекĕ çинчен куçне илмесĕр. Ытла та хумханнипе сывлăшĕ питĕрĕнчĕ. Ача, асăрханса, ун патне çывхарчĕ, татса илес тесе, чĕтрекен аллине тăсрĕ.

— Тăхта, Ванюш,— чарчĕ ăна Чике старик.— Кăштах кĕтес пулать. Вăхăчĕ çавăрănса çитеймерĕ-ха ăна татса илме... Пурин те хăйĕн вăхăчĕ, хăйĕн йĕрки пур,— терĕ вăл каллех.— Эх, хĕвел чечекĕ! Миçе ĕмĕр çакăнта пĕрле ирттертĕмĕр, халĕ уйрăлас пулать. Кĕçех эсĕ те каятăн. Эпĕ каллех пĕччен юлатăп. Малалла мĕнле пурăнассине хам та пĕлместĕп. Вĕçĕмсĕр çакăнта, çĕр айĕнче, лараяс çук, анчах тухса çӳреме те...— Чике старик каласа пĕтерелмерĕ, пӳлĕнчĕ, пуçне усрĕ те хуллен нăшăклатса илчĕ. Акă тата! Халĕ кăна питĕ хавасланса калаçрĕ-çке!

— Сире эпĕ кӳрентертĕм-и? — хăюсăррăн ыйтрĕ Ванюш, умра тăракан пĕчĕк старик çине шеллесе пăхса.

— Çук, ачам, çук. Ун пек ан шухăшла,— пуçне сулкаларĕ лешĕ, йывăррăн сывласа ярса.— Темиçе ĕмĕр çĕр тĕпĕнче ларса,

куҫ ҫутине ҫухатрӑм. Сана та аран-аран куратӑп. Сӳнчӗ пулӗ ӗнтӗ маншӑн ҫут тӗнче. Суккӑр куҫпа ӑҫта тухса ҫӳрӗн?..

— Врач патне каяс пулать. Вӑл тӳрлетет. Пирӗн ялта больница пур. Атьӑр манпа пӗрле,— чӗнчӗ ӑна ача.

Чике старик аллине сулчӗ те ӗсӗклесех йӗрсе ячӗ. Ванюшӑн ӑна йӑпатас, хаваслантарас килчӗ.

— Пӑхӑр-ха, манӑн мӗнле хунар пур,— терӗ вӑл, хаклӑ парнине кӗсйинчен кӑларса.— Сӗм вӑрманта вӑл мана ҫул кӑтартса пычӗ, умра хӑрушӑ ҫӗлен кӗтсе выртни ҫинчен систерчӗ, ӑна ҫӗнме пулӑшрӗ. Акӑ, тытӑр. Кнопкисем ҫине пусӑр-ха. Епле ҫутатать!

— Куратӑп! Тупата куратӑп! — кӗтмен ҫӗртен хаваслӑн кӑшкӑрса ячӗ старик, пӗчӗк хунара аллинче ҫавӑркаласа.— Хӗвел чечекне те, сана та уҫҫӑнах куратӑп халӗ!..

— Илӗр апла пулсан. Пуҫӗпех паратӑп. Эпӗ... Вӑл мана... кирлех мар,— терӗ ача ирӗксӗртереххӗн.

Анчах пӗчӗк старикӗн савӑнӑҫӗ нумая пымарӗ. Вӑл кӗҫех шӑпланчӗ, каллех салхуллӑн пуҫне усрӗ.

— Ҫук, хӑвӑнтах пултӑр. Ме, ил каялла,— терӗ вӑл хунарне Ванюш енне тӑсса.— Пурӗпӗрех эпӗ ниҫта та тухса ҫӳреес ҫук. Темиҫе ӗмӗр пӗр вырӑнта ларса, урасем хытрӗҫ. Утайми пултӑм, ыратаҫҫӗ. Малашнехи пурнӑҫа ҫакӑнта, ҫӗр айӗнче, ирттерме лекет ӗнтӗ манӑн,— кӗсйинчен шурӑ тутӑр кӑларса, Чике старик шывланнӑ куҫне шӑлса типӗтрӗ.

— Ура ыратать терӗр-и? Э-э, вӑл нимӗн те мар. Манӑн машина пур. Питӗ чаплӑ. Ӑҫта каяс килет, унта илсе каять. Кӑсӑя парнелерӗ. Шурлӑх урлӑ ҫав машинӑпа вӗҫсе килтӗм эпӗ,— терӗ Ванюш, старике хавхалантарма тӑрӑшса.

— Вӗҫекен машина-и? — пуҫне ялтах ҫӗклерӗ Чике старик.— Ӑна та мана парнелес теместӗн пулӗ те?

— Кӑмӑлӑр пулсан, тархасшӑн, илӗр.

— Эх! Куҫ та курать халӗ, ҫӳреме машина та пур. Вӑй ҫукки пӗтерет... Темиҫе ӗмӗр уҫӑ сывлӑшсӑр пурӑнса, пӗтӗмпех имшерленсе ҫитрӗм. Вӑйсӑр ӑҫта кайӑн,— каллех хуйха ӳкрӗ старик,— ҫук, манӑн савӑнса ҫӳресси иртрӗ пулӗ ҫав. Кирлӗ мар нимӗн

те. Эпӗ кунтах юлатӑп,— пӗчӗк ҫын питне аллипе хупларӗ те каллех макӑрса ячӗ.

— Лӑпланӑр. Ан йӗрӗр,— ҫаплах йӑпатасшӑн пулчӗ ӑна Ванюш.— Кунта килме пуҫтарӑнсан, Ахванеҫ мучи мана темле чей ӗҫтерчӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн манӑн шутсӑр нумай вӑй хушӑнчӗ. Парӑттӑм эпӗ ӑна сире, анчах майне пӗлместӗп...

— Мӗн?.. Мӗн терӗн эсӗ? — тӑруках хаваслансӗ Чике старик.— Ахванеҫ мучи, леш юмах ӑсти, пачӗ терӗн-и? И-и, пӗлетӗп эпӗ ӑна, ҫав вӑя, хам ӑша куҫарма... Анчах тӗрӗссине кала: чӑннипех кирлӗ мар-и вӑл сана? Апла пулсан, тӑр ҫакӑнта. Пӑх мана куҫран, ан хускал.

Ванюш Чике старике хирӗҫ пырса тӑчӗ. Лешӗ, шурӑ сухалне каҫӑртса, тӗссӗрленнӗ куҫӗпе ача ҫине тинкерчӗ. Шурӑхса пӗрkеленнӗ тути тем пӑшӑлтатрӗ.

— Пулчӗ! — янрарӗ унӑн хаваслӑ сасси.— Халӗ пурӑнатӑп. Пӑхха, мускулсем епле ҫирӗпленчӗҫ. Ай, Ванюш, тавтапуҫ сана! Чӑннипех питӗ ырӑ кӑмӑллӑ ача эсӗ. Ҫавӑнпа Тӗттӗм паттӑр чурисем ҫакӑнта ҫитме чарайман сана. Ой, мӗн тери савӑнӑҫ! Юрлас килет, ташлас килет. Ай-яй-яй-яй-яй-яра-ра! — Чике старик, ача евӗр, алхасма, кулма, выляма тытӑнчӗ.

Ҫак самантра таҫта аякра темле ӑнланмалла мар сасӑ хуллен кӗрлесе янраса кайрӗ: пӗрре... иккӗ... виҫҫӗ... Ура айӗнче ҫӗр кӑштах сисӗнмелле чӗтреннӗн туйӑнчӗ.

— Вӑхӑт ҫитрӗ! — пӑшӑлтатрӗ тӑруках шӑпланнӑ Чике старик.— Илтрӗн-и, ҫӗр хӑй систерет пире... Атя, ил мӗн кирлине. Тухатпӑр!..

Ача каллех ялкӑшса ларакан илемлӗ чечек патне пычӗ. Ӑна асӑрханса татса илчӗ.

— Ӗнтӗ ку ҫурт-йӗр тек никама та кирлӗ мар. Анчах саланса ҫухаличчен вӑл пире хӑйӗн ҫичӗ пӳлӗмӗнчен кӑлартӑр, асамлӑ пусмасем пире ҫӗр ҫине хӑпартчӑр,— пӑшӑлтатрӗ Чике старик.

Сасартӑк, аялтан темле вӑй тӗртнӗ пек, вӗсем ҫӳлелле ҫӗкленме тытӑнчӗҫ. Тепӗр самантран ҫӗр ҫине тухса та тӑчӗҫ. Кӑнкӑвак тӳпере хӗвел ялкӑшса пӑхать, кайӑксем юрлаҫҫӗ, йӗритавра симӗс курӑк кашласа ӳсет, тӗрлӗ чечек ешерет.

— Нумай ёмӗр пӗрле пурӑнтӑмӑр. Халӗ ӗнтӗ сывӑ пул, телей чечекӗ,— терӗ старик, кусне шӑлкаласа.— Эсӗ те сывпуллаш, ачам. Вӑхӑт ҫитрӗ. Кайтӑр хӑйне кӗтекен ҫӗре!

Ванюш аллисене ҫӳле ҫӗклерӗ.

— Сывӑ пул, хӗвел чечекӗ! Хӑвна чӗнекен, чунтан кӗтекен инҫетри ҫишсем патне васка. Инкекрен ҫӑл вӗсене, хуйхӑ-суйхӑран хӑтар,— хумханса пӑшӑлтатрӗ вӑл.

Хӗвел чечекӗ алӑ тупанӗ ҫинче хуллен сулланкаласа илчӗ, унтан ерипен сывлӑша ҫӗкленчӗ, вара, ялтӑртатса ҫунса, тӳпенелле вӗҫсе хӑпарса кайрӗ. Телейлӗ Ванюш вӑл курӑнми пуличченех ун хыҫҫӑн пӑхса тӑрса юлчӗ.

— Киле мӗнле ҫитмелле-ши манӑн? Эсир пӗлместӗр-и? — ҫавӑрӑнчӗ вӑл Чике старик енне. Пӑхрӗ те тӗлӗнсех кайрӗ. Халӗ кӑна унпа юнашар алӑ сулса тӑракан пӗчӗк старик ҫук та. Ӑҫта кайса кӗчӗ вара вӑл? Ванюш йӗри-тавра пӑхса илчӗ. Вӑл тӑван ялӗ ҫывӑхӗнчех, вӑрмана илсе кӗрекен сукмак ҫинче, тӑрать. Инҫе те мар пӗр ватӑ ҫын ӗнине ҫитерет.

— Ахванеҫ мучи! — кӑшкӑрса ячӗ Ванюш, ун патне чупса пырса.— Тупрӑм эпӗ Телей чечекне! Вӗҫсе кайрӗ вӑл. Ҫишсем патне кайрӗ!

Старик ача ҫине ӑшшӑн кулкаласа пӑхрӗ, ан шавла тенӗ евӗр, шӗвӗр пӳрнипе хуллен юнаса илчӗ.





Ял хыҫӗнчи вӑрмантан Ахванеҫ мучи тухрӗ. Пӗр аллинче кукӑр туя, тепринпе кӑмпа тултарнӑ карҫинкка йӑтнӑ. Ывӑннӑ пулас, йывӑҫ тункати ҫине канма ларчӗ. Ҫакна курса, ҫывӑхрах тем ҫуйхашса чупакан ачасем ушкӑнӗпех ун патне пырса тӑчӗҫ.

— Ахванеҫ мучи, юмах каласа пар-ха? — ыйтрӗ вӗсенчен пӗри. Старик пичӗ-куҫӗ ӑшшӑн йӑлкӑшса ҫуталчӗ, тӗссӗрленнӗ тути хӗрринче чее кулӑ выляса иртрӗ.

— Ҫук, пулмасть,— аллине сулчӗ вӑл.— Юмах хутаҫҫине киле хурса хӑвартӑм. Пӗлмен эсир кунта пуласса.

Ачасем кулса ячӗҫ.

— Ну, мучи... Пӗр юмах та пулин ярса пар ӗнтӗ... Пӗрре кӑна,— илтӗнчӗ ушкӑнран темиҫе сасӑ.

— Эй, ачу-пӑчупа,— кӑмӑлсӑрланнӑн мӑкӑртатса илчӗ лешӗ.— Ара, каларӑм-ҫке, ҫумра пӗр юмах та ҫук тесе. Киле кайса килесши вара хутаҫ патне?.. Чимӗр-ха, мӗскер йӑшӑлтатса илчӗ вара ҫакӑнта? — тем шыранӑ евӗр мучи пиншак кӗсйине хыпаласа пӑхрӗ.— Э-э, акӑ хайхи... Юмах-ҫке ку!.. Хе-хе... Сирӗнпе тӗл пуласса

циссе кěрсе ларнă ěнтě вăл кунта,— çаплах шӳтлекелесе, Ахванеç мучи аллине кěсйине чикрě.— Атя тух. Пăх-ха, мěн чухлě ача кěтет сана. Э-э, авалхи юмах ку. Юрě, каласа парам. Анчах чěнмесěр, тимлěн итлемелле. Сăмах хушнине, пӳлнине ман юмахсем пачах юратмаççě. Ку та çавах. Кӳренě те вара тара парě, тыт-ха ăна кунта, ирěкре. Ăнлантăр-и?

Ачасем килěшрěç, шăпланса, юмах ăсти çине тинкерчěç. Аллинчи туйине хурса, мучи кăвакарнă сухалне шăлса якатрě, ӳсěркелесе илчě...

— Тахçан ěлěк, темиçе ěмěр каялла,— калама пуçларě вăл,— аслă çěрěн пěр енче (шăп ăçтине пěлместěп, тен, çак вырăнсенчех, тен, урăх çěрте) çынсем пурăннă. Тырă-пулă акнă, выльăхчěрлěх усранă, ача-пăча ӳстернě. Кӳршěсемпе суту-илӳ тунă, пěрпěрин патне хăнана çӳренě, хирěçмен, тавлашман-вăрçман. Çапла кун хыççăн кун, çул хыççăн çул иртсе пынă. Анчах пурнăç ялан пěр пек килмест çав. Тепěр чух кěтмен-туман çěртенех инкексинкек сиксе тухать. Пěррехинче çак çынсем çине хăрушă тăшман тапăннă. Таврари мěнпур çěрсем çинче икě çунатлă, темиçе пуçлă çăткăн çěленсем хуçа пулса тăнă. Темěн тěрли те пулнă вěсен хушшинче. Виçě, пилěк пуçлисем йышлăрах тěл пулнă. Çичě пуçлисем те курăнкаланă. Чи асли, вěсен патши ěнтě, тăхăр пуçлă пулнă. Ыттисем ăна пăхăннă, итленě, вăл хушнине тунă. Тытăннă çак усалсем çынсене хěсме, çаратма, кӳрентерме. Мěн ěçлесе тупнине, мěнпур пурлăхне турта-турта илнě. Çěр çийěн халăх куççулě шыв пек юхнă, йывăр хуйхă çил пек вăркăшса тăнă. Анчах мěн тăвăн? Çěленсем вăйлă, нумайăн.

Темěн чухлě вăхăт иртнě çапла, тен вунă çул, тен, темиçе ěмěр, паллă мар. Пěррехинче ялта, хресчен çемйинче, ывăл ача çуралнă. Ăна Йăван тесе чěннě. Ӳсет хайхи Йăван кунсерен мар, сехетсерен. Ун тантăшěсем урамра мечěкле выляса чупаççě, ку вара пěвěпе те, ăсěпе те çитěннě каччăсен шутне кěрет. Çӳллě, патвар. Таврара унран вăйли çук. Кěрешӳсенче чи паттăр йěкěтсене те çăмăллăнах çěнтерет. Мухтаççě Йăвана. Тěнчере чапа тухнă вăйлăран та вăйлă паттăрсем унпа кěрешсе пăхма ěмěтленеççě. Анчах маттур каччă хаклă вăхăта вăйă-кулăра ирттересшěн

мар. Хастар чӗри ӑна тӑван халӑх телейӗшӗн хаяр ҫапӑҫӑва тухма чӗнет.

— Атте, анне,— тет вӑл пӗррехинче, вӗсем умне чӗркуҫленсе ларса.— Пиллӗр мана. Усал ҫӗленсемпе ҫапӑҫма каятӑп. Тӑван халӑх асапланса йӗнӗ чух урӑхла пурӑнма вӑй-халӑм ҫук, е ҫӑткӑн харам пырсенчен тӑван ҫӗршыва тасатӑп, е ҫапӑҫура пуҫа хурӑп.

Ҫакна илтсен, Йӑван паттӑрӑн ашшӗпе амӑшӗ хурланса йӗрсе яраҫҫӗ, куҫҫулӗ юхтара-юхтара, пӗртен-пӗр савнӑ ывӑлне усал пусмӑрҫӑсене хирӗҫ ҫапӑҫава кайма пиллеҫҫӗ.

Йӑван паттӑр тимӗрҫӗсем патне пырать, хӗҫ туса пама ыйтать. Лешсем савӑнсах килӗшеҫҫӗ. Виҫӗ кун, виҫӗ каҫ пӗр канмасӑр ӗҫлеҫҫӗ. Акӑ, хӗҫ хатӗр. Ҫивӗч, сулӑмлӑ, ҫирӗп. Йӑван ҫӗклесе пӑхать. «Курӑк касма юрать ӗнтӗ»,— тет. Тытать те хӑрӑк турат пек шарт хуҫса пӑрахать. Тимӗрҫӗсем каллех ӗҫе тытӑнаҫҫӗ. Ҫичӗ кун, ҫичӗ каҫ канмасӑр тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Ӗнтӗ хӗҫ хатӗр. Пырать Йӑван, ҫӗклесе пӑхать. «Купӑста пуҫӗ касма юрать ӗнтӗ»,— тет. Авать те ку хӗҫне те хуҫса пӑрахать. Тӗлӗннӗ тимӗрҫсем виҫҫӗмӗш хут ӗҫе тытӑнаҫҫӗ. Вуникӗ кун, вуникӗ каҫ пӗр канмасӑр тӗрмешеҫҫӗ. Акӑ, хӗҫ хатӗр. Вуннӑн ҫӗклеҫҫӗ — ҫӗклеймеҫҫӗ. Ҫивӗч. Тимӗре те шачах касса татать. Пырать Йӑван, хӗҫне илет, сулкаласа пӑхать, ҫивӗчӗшне тӗрӗслет. Килӗшрӗ паттӑра хӗҫ. Вӑл тимӗрҫӗсене тав тӑвать. Вара хаяр тӑшманпа ҫапӑҫма тухса каять. Пуҫлать ҫӗленсене хӑвалама, халӑх асапӗшӗн, унӑн куҫҫулӗшӗн тавӑрма. Касать, ваклать, таптать, тӗп тӑвать. Хӑраса ӳкеҫҫӗ хайхи сӗмсӗрсем. Тытӑнаҫҫӗ тарма, ӑҫта май килет, унта ҫӑлӑнӑҫ шырама. Анчах, таҫта пытансан та, шыраса тупать вӗсене хресчен ывӑлӗ. Кӗҫех Йӑван-паттӑр ҫинчен мӗнпур таврана ырӑ хыпар сарӑлать. Пур ҫӗре те чӗнеҫҫӗ ӑна, пур ҫӗрте те ҫӑкӑр-тӑварпа кӗтсе илеҫҫӗ. Пырса кӗрет ҫапла Йӑван паттӑр пӗр хулана, пӑхать — мӗнпур халӑх уласа йӗрет.

— Мӗн пулнӑ? — ыйтать вӑл.

— Ах, Йӑван,— теҫҫӗ ҫынсем,— хуйхӑ пирӗн, пысӑк хуйхӑ. Хулана тӑхӑр пуҫлӑ ҫӗлен тапӑнчӗ. Мӗн пуррине пӗтӗмпех туртса илчӗ, пур халӑха нимӗнсӗр хӑварчӗ. Ку та сахал пулчӗ ҫӑткӑна. Кашни ҫул килрен пӗрер ача пуҫтарать, кашни ҫул чи илемлӗ

хӗрсенчен пӗрне хула хӗррине илсе тухса пама хушать. Итлемесен, пурне те пӗтеретӗп, хулана ҫунтарса яратӑп тет. Паян ҫав ирсӗр патне эпир тата тепӗр хӗр кайса ӑсататпӑр.

Пӑхрӗ те Йӑван хӗр ҫине — чӗри ыратса кайрӗ. Мӗн тери чипер, мӗн тери чечен... Мӗн тери телейсӗр!.. Йӑван аллинчи хӗҫне ҫиллессӗн чӑмӑртарӗ. Вилес пулсан та, хула халӑхне хаяр пусмӑртан ҫӑлма тупа турӗ. Ҫав вӑхӑтра ун умне сухаллӑ типшӗм ватӑ ҫын пырса тӑчӗ.

— Ҫук, Йӑван, сан вилме юрамасть,— терӗ вӑл.— Эсӗ халӑх паттӑрӗ, пире сыхлакан, пирӗн шанчӑк. Эсӗ вилсен, эпир те пӗтетпӗр. Акӑ сана тӗкӗр. Ахаль тӗкӗр мар вӑл. Унра виҫӗ асамлӑ вӑй. Ытла та йывӑр килсен, алла ил те тӗкӗрӗн ҫутӑ енне тӑшман ҫинелле ҫавӑр. Мӗн пулассине куратӑн унта.

Йӑван паттӑр старике тав турӗ, пӗчӗк тӗкӗре хӗвне чикрӗ те васкасах хуларан тухрӗ. Пӑхать — инҫе те мар тӗме вырӑн. Ун ҫинче хитре хӗр ларать. Ҫӗленӗ те вӗҫсе ҫитнӗ. Пысӑк ҫуначӗсене саркаланӑ, васкамасӑр вӗҫе-вӗҫе ҫавӑрӑнать. Вӑрӑм чӗрнеллӗ урисене тӑснӑ, кӗҫ-вӗҫ хӗре ярса тытса ҫӗклесе кайӗ. Паттӑр вӑхӑтра ӗлкӗрчӗ. Чупса пычӗ те ҫивӗч хӗҫне мӗнпур вӑйран тӑшман енне сулчӗ. Ҫӗленӗн пӗр пуҫӗ вӗлтех сирпӗнсе кайрӗ. Лешӗ хӑрушшӑн чашкӑрса ячӗ. Унӑн сакӑр ҫӑварӗнчен те хӗрлӗ ҫулӑм йӑлкӑшса тухрӗ, таврана йывӑр сывлӑш сарӑлчӗ. Ҫӗлен Йӑван паттӑр ҫине ыткӑнчӗ. Тӑшманӑн ҫивӗч чӗрнисем хулпуҫҫие чӗрмелесе илчӗҫ, ӳте кӗпи-мӗнӗпе тӑпӑлтарса кӑларчӗҫ. Хаяр ҫапӑҫу пуҫланчӗ. Икӗ кун, икӗ каҫ вӗсем пӗр чарӑнмасӑр ҫапӑҫрӗҫ. Ҫӗр чӗтрерӗ, тусем-сӑртсем ишӗлчӗҫ. Виҫҫӗмӗш кунӗнче Йӑван ывӑннине туйрӗ. Хулпуҫҫинчи суранран ҫаплах юн сӑрхӑнать, ура чӗтрет, куҫ хуралса килет... Ҫакна туйса, тӑхӑр пуҫлӑ ҫӗлен хаваслӑн шӑхӑрса ячӗ. Вӑл ӗнтӗ паттӑр тӗлӗнчех ҫаврӑнма тытӑнчӗ, ӑна ярса тытса, вакласа пӑрахма хатӗрленчӗ. Юлашки вӑйне пухса, Йӑван сулӑмлӑ хӗҫне тӑшман ҫине ҫӗклерӗ, анчах ҫапма вӑй ҫитереймерӗ, чӗркуҫҫи ҫине персе анчӗ. Ҫав самантра паттӑр шурӑ сухаллӑ старик парнине аса илчӗ. Тӗкӗре хӗвӗнчен васкаса кӑларчӗ те ҫутӑ енӗпе тӑхӑр пуҫлӑ ҫӗлен ҫине тӗллерӗ. Асамлӑ тӗкӗр ӑшӗнчен хӗвел пек ҫап-ҫутӑ виҫӗ пайӑрка сирпӗнсе тухрӗ,

усал тӑшман ҫине пырса тӑрӑнса, ӑна витӗрех шӑтарса тухрӗ. Ҫӗлен, хӑрушшӑн кӑшкӑрса ярса, ҫӗр ҫине тӗшӗрлсе анчӗ. Йӑван ҫывӑхнех ӳксе, ӑна пысӑк ҫуначӗпе хупласа хучӗ. Ҫакна курса, пӗчӗк сӑрт ҫинче ларакан чипер хӗр сиксе тӑчӗ, чупса пырса, Йӑван паттӑра тӑма пулӑшрӗ, таса ҫӑлкуҫ шывӗпе суранне ҫуса тасатрӗ, ӑна пуҫри шап-шурӑ тутӑрӗпе туртса ҫыхрӗ. Вӗсем вара алла-аллӑн тытӑнчӗҫ те, савӑнса-кулса, хула еннелле утрӗҫ. Хирӗҫ халӑх чупать, кӑшкӑрать, юрлать, ташлать. Йӑван паттӑра чыслать... Каярахпа чаплӑ туй пулчӗ. Йӑван паттӑр ҫӗленрен ҫӑлнӑ чипер хӗре качча илчӗ. Ҫав туя тӗнчери мӗнпур ырӑ ҫын пуҫтарӑнчӗ. Эпӗ те пултӑм унта. Йӑван паттӑрпа унӑн чипер арӑмне чӗререн телей сунтӑм, ӗҫрӗм-ҫирӗм, савӑнтӑм. Халӗ те пурнаҫҫӗ, тет, вӗсем...

Юмах вӗҫленсен, ачасем нумай лармарӗҫ, каллех чупса саланчӗҫ. Старик ҫывӑхӗнче Ванюш кӑна тӑрса юлчӗ.

— Ахванеҫ мучи,— терӗ вӑл,— эсӗ Йӑван паттӑра панӑ тӗкӗр ҫинчен каласа пӗтермерӗн-ҫке. Ӑҫта вӑл, ҫав тӗкӗр?

— Э-э,— терӗ юмах ӑсти, тем аса илнӗ пек пулса,— ара-ҫке... Кхм... кхм... Ӑна, ҫав тӗкӗре, ҫӗленсем хӑйсемпе пӗрле космоса илсе кайнӑ, теҫҫӗ.

— Мӗнле космоса? — тӗлӗнчӗ ача.

— Тӑхӑр пуҫли ҫӗре персе ансан, ҫав ирсӗрсем калама ҫук хӑраса ӳкнӗ. Вара чӗрӗ юлнисем пурте пӗрле пуҫтарӑннӑ та урӑх планета ҫине вӗҫсе кайнӑ. Халӗ те ҫавӑнтах пурӑнаҫҫӗ, тет.

— Епле вӗҫсе кайма пултарнӑ вӗсем унта? — тӗлӗнчӗ ача.— Вӗсен, мӗн, космос карапӗ пулнӑ-и?

— Мӗн карапӗ пултӑр вӑл вӑхӑтра? — хирӗҫлерӗ мучи.— Усал тухатмӑш пулӑшнӑ, тет, вӗсене... Ҫапла, ачам, кирлӗ пулсан, усалпа усал яланах пӗр чӗлхе тупаҫҫӗ... Тӗкӗрӗ пирки ҫапла. Ҫапӑҫу хыҫҫӑн халран кайнӑ Йӑван паттӑр хӑй те сисмен, ӑна аллинчен кӑларса ӳкернӗ. Тӑруках аса илеймен ун ҫинчен. Каярахпа чупса пырать — шырать-шырать, тупаймасть. Куракансем пулнӑ — пӗр ҫӗленӗ вӑрттӑн шуса пычӗ, тет те, тӗкӗре ярса илсе, хӑвӑртрах тусем хушшине кайса пытанчӗ, тет. Вӑт ҫапла. Урӑх нимӗн те пӗлместӗп, илтмен. Те пур ҫав тӗкӗр, те халиччен пӗтнӗ, ваннӑ...

— Çук, ванман,— килĕшмесĕр пуçне сулкаларĕ Ванюш.— Епле вантăр-ха вăл? Унра тата икĕ асамлă вăй юлнă-çке.

— Çаплах та-ха... Анчах тĕкĕрпе драконсем те усă курма пултарнă,— асăрханса каларĕ юмах ăсти.

— Асамлă тĕкĕр, çĕленсене итлесе, усал ĕç тума килĕшес çук,— каллех хирĕçлерĕ Ванюш.

— Тĕрĕс калатăн,— терĕ мучи, кăштах чĕнмесĕр ларнă хыççăн.— Эпĕ ун çинчен шухăшламан. Халиччен ваннă пулĕ çав тĕкĕр тенĕ. Мĕншĕн çаплах тĕпчесе ыйтатăн-ха эсĕ? Е мĕнле те пулин шут тытрăн-и?

— Илсе килесчĕ ăна. Мĕн чухлĕ усă пама пултарĕччĕ вăл кунта пулсан...

— Шухăшĕ лайăх. Анчах кам килĕшĕ çав çăткăн тискер çĕленсем патне кайма? — ыйтрĕ Ахванеç мучи, Ванюш çине шиклenерех пăхса.

— Манăн вĕсем хăш çăлтăр çинче пурăннине кăна пĕлесчĕ. Вара космонавтсем патне çыру çырса яратăп та...

— Э-э, космонавтсем,— терĕ мучи кăмăллăн,— çапла, маттур ачасем. Вĕсемпе кайма, паллах, хăрушă мар. Анчах вĕсен хăйсен ĕçĕ-çке, хăйсен çулĕ-йĕрĕ, тахçан палăртса хунă планĕ,— янахне сăтăркаласа, старик пĕр вăхăт чĕнмерĕ.— Çăлтăрне тупма маншăн нимĕн те мар. Эпĕ юмах ăсти-çке. Çапах унта пĕччен кайма хăрушă. Юлташусем те таçта чупрĕç, пĕри те курăнмаççĕ.

— Эпĕ хăрамастăп. Эпĕ вĕсене автоматпа тр-тр-тр-р! «Парăр пирĕн тĕкĕре!» — тейĕп çеç...

— Ачи маттур-ха эс... Анчах нумайăн-çке вĕсем, усалсем,— терĕ Ахванеç мучи, шухăша кайнă пек пулса. Акă унăн пичĕ-куçĕ хаваслăн çуталчĕ.

— Э-э, аса илтĕм. Пур сан валли юлташ. Лайăх, шанчăклă юлташ. Ун пеккисем çинчен «вутра та çунмасть, шывра та путмасть», теççĕ.

Старик тăчĕ, çывăхри юман патне пырса, ăна кукăр туйипе виçĕ хутчен хыттăн шаклаттарчĕ. Çав самантрах йывăççем хушшипе такам утни курăнчĕ. Кĕçех вĕсен умне йăрăс пÿллĕ каччă пырса тăчĕ. Ванюш ун çине тĕлĕнсе пăхрĕ. Ытла та кулăшла



тумланнă ку çамрăк. Театрти артистсем пекех. Çара уран, çийĕнче саплăклă пир кĕпе, пилĕкне пиçиххипе мар, пушăтпа çыхнă.

— Ма чĕнтĕн? Мĕн кирлĕ? — ыйтрĕ вăл, юмах ăсти çине кăмăлсăррăн пăхса.

— Ку — юмахри Ухмах Йăван,— пăшăлтатса пĕлтерчĕ Ванюша Ахванеç мучи.— Ĕç пур. Шăп сана валли,— терĕ çавăн хыççăн йĕкĕте.— Нумай пуçлă çĕленсем Йăван паттăр тĕкĕрне вăрласа кайнине пĕлетĕн вĕт...

— Вара? — кĕскен сăмах хушрĕ лешĕ, юмах ăсти çине çаплах кăмăлсăррăн сăнаса пăхса.

— Çав тĕкĕре илсе килес пулать.

— Мĕн тума?

— Унсăрăн юмах вĕçне тупаймастпăр. Сана хушасшăн эпĕ çĕленсем патне кайса килме. Пĕччен мар. Акă юлташ. Вăл та сан ятлах. Ванюш тетпĕр.

— Каймастăп,— терĕ Ухмах Йăван.— Унта-кунта çапкаланса çӳреме вăхăт çук манăн. Эпĕ кĕтӳ пăхатăп... Урăх ĕç те пур. Тухатмăш карчăк пурăнать кунта. Ых, ытла та киревсĕр! Вĕçĕмсĕр кама та пулин сăтăр тăвать, тарăхтарать, йĕртет. Çавна пĕрре лайăх вĕрентес тетĕп-ха усалланма. Сыхласа тытас пулать.

— Ĕлкĕретĕн, Йăван. Ниçта та тармасть санран тухатмăш.

— Ман пиччесем пекех эсĕ,— çиллессĕн мăкăртатрĕ лешĕ, юмах ăсти çине куç айĕн пăхса.— Килте мĕн те пулин тумалли пултăр, тӳрех ман çине йăвантараççĕ. «Ухмах Йăван, çавна ту, Ухмах Йăван, кăна ту, çавна илсе кил...» Вĕçĕмсĕр Ухмах Йăван. Эсĕ те вĕсен юрринех юрлатăн. Мĕншĕн манăн каймалла çав усал çĕленсем патне? Эпĕ имшер, вăйсăр... Вĕсемпе çапăçаймастăп. Çисе ярсан...

— Эй, калаçатăн çав кирлĕ мара,— кулчĕ Ахванеç мучи.— Эсĕ вилĕмсĕр. Ăна пурте пĕлеççĕ.

— Кам çухатнă, çав кайтăр,— татса хучĕ лешĕ.

— Йăван-паттăр çĕршыв чиккине сыхлать. Тĕнчери лару-тăру лăпкă мар. Хăвах пĕлетĕн.

— Эппин патша... леш патша ывăлĕ Иван кайтăр.

— Патшасене тахçанах пĕтернĕ... Э-э, мур, эсĕ леш юмахри

çинчен калатăн-çке... Юрамасть ăна хăй патшалăхĕнчен çапла инçете тухса кайма... Ну, мĕн турткалашатăн-ха? Мĕн тилмĕрттеретĕн? — терĕ Ахванеç мучи, тарăхнă пек пулса.— Каяс килет вĕт санăн. Куçран пăхсах пĕлетĕп.

Ухмах Йăван кулса ячĕ.

— Юрĕ-çке, юрĕ. Ан çиллен. Шӳт турăм кăна. Кайса килĕпĕр,— терĕ вăл хаваслăн.— Анчах ăçта санăн космос карапĕ? Ма курмастăп эпĕ ăна?

Çакна илтсен, Ахванеç мучи тĕлĕннипе аллине шарт çапрĕ.

— Ну, каларăн та... Ăçтан пĕлетĕн эсĕ ун çинчен, Йăван? Камран илтрĕн?.. Çук манăн нимĕнле космос карапĕ те... Пулма та пултараймасть. Хăвах шухăшла: эпĕ конструктор мар, инженер та мар. Юмах ăсти çеç. Акă сире валли туя. Утланса ларăр та яра парăр.

— Шăпăр çине утланса вĕçекен тухатмăш карчăк пек-и? — тутине пăрса илчĕ Йăван.— Космос карапĕ çук пулсан, каймастăп. Ан та ӳкĕтле.

Ахванеç мучи нимĕн калама аптрарĕ.

— Йăван,— терĕ Ванюш, юмах паттăрĕ патне пырса,— эпир каялла космос карапĕпе килĕпĕр. Асамлă тĕкĕртен ыйтсан, вăл туса парать.

— Тĕрĕс! — тăруках хавасланчĕ лешĕ, аллине ача хулпуççийĕ çине хурса.— Пуçу ĕçлет иккен санăн. Юрĕ, кил, тăр ман хыçа.— Йăван Ахванеç мучи туйине утланчĕ.

— Автомат,— аса илчĕ Ванюш.— Унсăрăн епле?.. Эх, киле манса хăварнă. Тăхтăр кăштах, эпĕ халех чупса кайса илетĕп.

— Çук, çук! — хирĕçлерĕ Ухмах Йăван.— Вăхăт нумай иртет.

— Акă ухă выртать. Сан мар-и? — ыйтрĕ Ахванеç мучи.

— Мĕн усси унран? Пурпĕрех йĕпписем çук,— кĕтмен çĕртен шывланнă куçне шăлса илчĕ ача.

— Ан нăшлат, Ванюш паттăр,— тăрăхласа илчĕ Ухмах Йăван.— Кирлĕ пулсан, лере тупатпăр. Тыт манран. Кайрăмăр.

Юмах ăсти çамрăксен умне пырса тăчĕ.

— Куçăрсене хупăр. Шутлатăп. Эпĕ «вуннă» темесĕр ан уçăр... Пĕрре... иккĕ... виççĕ...

Сасă аякка кайрĕ, вăйсăрланса пычĕ. «Вуннă!» — илтĕнчĕ таçтан, питĕ инçетрен.

Ванюш куçне уçрĕ, хăвăрт йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ. Чăн та, вĕсем халиччен пачах курман вырăнта тăраççĕ. Тĕнчи те урăх. Тӳпере икĕ хĕвел, икĕ хĕрлĕ çавра. Анчах Ванюша ку мар, урăххи тĕлĕнтерчĕ. Çутçанталăк кунта икĕ пая уйăрăлнă. Сулахай енче çап-çутă. Янкăр уяр пĕлĕт тап-таса, кăвак пурçăн пек йăлкăшать. Сип-симĕс йывăç-курăк ешерет. Вĕсем çинче сĕтеклĕ çимĕççем çакăнса тăраççĕ. Тĕрлĕ çырла ӳсет. Çил варкăшнă май чечексем хитре пуçĕсене сулкалаççĕ. Кайăк юрри илтĕнет, илемлĕ лĕпĕшсем вĕçкелесе çӳреççĕ. Сылтăм енче пачах урăхла. Куçа илĕртекен пĕр йăмăх çутă япала та курăнмасть. Кăвак пĕлĕте пылчăклă шыва чиксе кăларнă тейĕн. Вăл тĕксĕм, илемсĕр. Умра таçта çитиех тӳрем вырăн сарăлса выртать, анчах çийĕ тикĕс мар, такам чавса пăснă пек, путăклă-шăтăклă. Ун çинче тĕссĕрленнĕ сайра курăксăр пуçне нимĕн те ӳсмест. Çывăхрах пĕртен-пĕр лутака йывăç кăна ларать. Вăл та ыттисем пек мар. Ун çинче пĕр çулçă та çук. Шĕп-шĕвĕр вăрăм йĕпсем кăна, такама юнанă евĕр, пур еннелле те кăнтарса тăраççĕ. Пĕр чĕрчун та курăнмасть. Кайăк-кĕшĕк сасси те, хурт-кăпшанкă нăйласа вĕçни те илтĕнмест. Хавассăр, пушă вырăн...

— Ăçта-ши пирĕн тĕкĕр? — терĕ Ухмах Йăван, йĕри-тавра пăхкаласа.

— Хăш енче шырамалла-ши ăна? Никамран ыйтма çук. Çывăхра пĕр чун та курăнмасть. Пурте вилсе пĕтнĕ тейĕн.

— Çĕленсем çав тусем хушшинче пурăнмаççĕ-ши? — ыйтрĕ Ванюш, таçта аякра, çӳхе тĕтре хыçĕнче, купаланса тăракан сăрт-ту çине кăтартса.

— Атя, кайса пăхар. Тен, тупăпăр.

Утăм тума та ĕлкĕреймерĕç, кĕтмен çĕртен хайхи йĕплĕ йывăç турачĕсем вырăнтан хускалчĕç. Вĕсенчен пĕри туртăнса тăсăлчĕ те çула пӳлсе хучĕ.

— Ку тата мĕскер? — ыйтрĕ Йăван. — Йывăç, мĕн кирлĕ сана пирĕнтен?

Туратсем пĕр-пĕрин çумне сĕртĕнсе чăшăлтатса илчĕç.

— Эсир камне те, кунта мӗн тӗллевпе килнине те эпӗ пӗлетӗп. Илтрӗм калаҫнине,— терӗ сасӑ.— Инҫе кайма кирлӗ мар. Авӑ пысӑк чул муклашки курӑнать. Эсир асӑннӑ тӗкӗр ун айӗнче выртать.

«Калаҫакан йывӑҫ!» — хӗпӗртерӗ Ванюш.

— Калӑр-ха, тархасшӑн,— терӗ вӑл сӑпайлӑн,— ыйтса пӗлме юрать-и сирӗнтен?.. Пире кунти ҫутҫанталӑк питӗ тӗлӗнтерет. Мӗншӗн уйрӑмах икӗ тӗрлӗ вӑл?

— Икӗ хуҫа, ҫавӑнпа,— илтӗнчӗ сасӑ.— Пӗр енче ӑслӑ, ӗҫчен халӑх пурӑнать. Кунта акӑ ҫӑткӑн харам пырсем хуҫа пулнӑ. Вӗсем ӗҫлемеҫҫӗ. Янттине хапсӑнса, ҫаратас, пусмӑрлас шутпа ҫеҫ пурӑнаҫҫӗ. Пӗлетӗр эсир вӗсене. Нумай пуҫлӑ драконсем.

— Пӗлӗт тата? Вӑл та икӗ тӗслӗ-ҫке...

— Пирӗн икӗ хӗвел, анчах вӗсем мӗнлине куратӑр ӗнтӗ,— терӗ каллех чӑшӑлтатакан сасӑ.— Хӗрлӗ, тӗксӗм вӗсем. Йывӑҫкурӑка ешерсе ӳсме ҫителӗклӗ ҫутӑ парайма҃ҫҫӗ. Ҫавӑнпа унта, сулахай енче, урӑх ҫутӑ тунӑ. Тинкererex пӑхӑр-ха: аялтан кӑшт палӑракан сенкер пайӑркасем хӑпараҫҫӗ. Тӳпе те ҫавӑнпа уйрӑмах илемлӗ — кӑн-кӑвак курӑнать.

— Тата ыйтмалли пур манӑн,— лӑпланаймарӗ Ванюш.— Ҫӑткӑн драконсем мӗншӗн тивмеҫҫӗ сулахай енчи ҫак пуян вырӑнсене?

— Ирӗк пулсан, тӗппипех аркатӗччӗҫ те. Чикӗ пур унта. Ҫав ямасть.

— Чикӗ? — тӗлӗнчӗ ача, пуҫне унталла-кунталла пӑркаласа.— Ӑҫта вӑл?

— Кунтах акӑ. Темиҫе утӑмрах. Ҫирӗп чикӗ. Никам та, пӗр чун та каҫаймасть ун урлӑ. Сирӗн куҫа курӑнмасть пулас вӑл. Пырса пӑхӑр. Вара туятӑр.

Йӑван хускалмарӗ. Анчах Ванюш чӑтаймарӗ, йывӑҫ сӑмахӗсене тӗрӗслесе пӑхас килчӗ унӑн. Сывлӑш тӗслӗ, пачах куҫа курӑнман чикӗ пулать-и вара? Ҫывӑхах пырса, вӑл сӗтеклӗ ҫимӗҫ енне аллине тӑсрӗ кӑна, такам тӗртсе янӑ пек, ҫавӑнтах каялла сирпӗнсе кайрӗ. Татах ҫывхарчӗ — каллех ывтӑнчӗ... Ку Ванюша хытӑ тӗлӗнтерчӗ.

— Мӗнле вӑй вӑл? Мӗнрен тунӑ ӑна? — ыйтрӗ ача.

— Нумай пĕлес пулать ун пеккине ăнланма,— терĕ йывăç.— Кунти наука çитĕнĕвĕ вăл.

— Камсем вĕсем, çавна тăвакансем? Çынсем-и? — тĕпчеме чарăнмарĕ Ванюш.

— Çук, сирĕн пек мар вĕсем. Анчах алăллă-ураллă, ăслă-тăнлă.

— Манăн тата та ыйтмалли пур,— хыпкаланчĕ ача.— Эсир асамлă тĕкĕр чул муклашки айĕнче выртать терĕр. Драконсем мĕншĕн унпа усă курмаççĕ? Ма çавăнта пăрахнă вĕсем ăна?

— Э-э, тем те хăтланса пăхрĕç вĕсем çав тĕкĕрпе. Вăл ĕçчен кӳршĕсене каллех чура тума пулăшĕ тесе шанчĕç пулас. Анчах лешĕ вĕсене итлемерĕ. Çĕленсем ыйтнине пĕрне те тумарĕ. Тарăхнă тăхăр пуçлă дракон ăна çак чул çине çавăрса çапрĕ. Ун хыççăн ытти çĕленĕсем тытăнчĕç ăна тĕп тума... Таптарĕç, хуçкаларĕç, чулсем çине ывăта-ывăта ячĕç. Вăл пурпĕрех ванмарĕ, пĕтмерĕ.

— Эсĕ тата кам? — ыйтрĕ халиччен чĕнмесĕр тăнă Йăван.— Мĕншĕн çак пушă хирте пĕр-пĕччен ӳсетĕн? Ма сан çинче çулçă çук, сăнă пек шĕп-шĕвĕр йĕпсем кăна?

Йывăç çиййĕн вичкĕн çил чупса иртрĕ тейĕн. Пиçĕ туратсем хускалчĕç. Унталла-кунталла сулкаланса, тем çинчен хурлăхлăн чăштăртатса илчĕç.

— Малтан эпĕ йывăç пулман,— илтĕнчĕ сасă.— Ман йăх, манăн янташсем чикĕ леш енче пурăнаççĕ. Драконсем вĕçсе киличчен çак аслă планета çинче эпир çеç пурăннă. Пуян, илемлĕччĕ ун чух кунти вырăнсем. Халĕ акă пĕр усăсăр пушă хир саралса выртать. Нумай пуçлă çĕленсене эпир уççăнах хирĕç тăрса çĕнтерме пултараймарăмăр. Анчах, чура пулса, пусмăр тӳсме пирĕнтен нихăшĕ те килĕшмерĕ. Вара пĕр каç, тăшмансем тутлă ыйăха путсан, пуçтарăнтăмăр та халиччен пурăнман пушă вырăнсене куçса кайрăмăр. Йĕри-тавра пырса кĕрейми чикĕ туса лартрăмăр. Тек пире вăйпа пăхăнтарма çуккине харам пырсем кĕçех ăнланчĕç. Ултавпа çĕнтерме шут тытрĕç. «Пулни-иртнишĕн каçарăр. Малашне эпир те сирĕн пекех ĕçлесе пурăнас тетпĕр. Пулăшăр пире»,— терĕç. Эпĕ нумай вĕреннĕ. Манăн пĕлӳ пысăк. Пулăшас килчĕ.



Тӳпа тунине ӗненсе, эпӗ вӗсен енне каҫрӑм. Вара ӗмӗрлӗхех ҫакӑнта юлтӑм...

Пиҫӗ туратсем каллех хускалчӗҫ. Пӗр-пӗрин ҫумне сӗртӗнсе, нумайччен хурлӑхлӑн чӑштӑртатрӗҫ.

— Вара? — ыйтрӗ Йӑван, йывӑҫ тек чӗнменнине кура.

— Драконсем мана ярса тытрӗҫ,— тӑсрӗ хӑй калавне лешӗ.— Хаяр вилӗмпе хӑратса, чикке илсе пӑрахма хушрӗҫ. Эпӗ килӗшмерӗм. Вара хӗнеме, асаплантарма тытӑнчӗҫ, унтан ҫак йывӑҫ ҫумне ҫыхса хучӗҫ. Ун чух ку вырӑнсенче тем тӗрлӗ илемлӗ, усӑллӑ йывӑҫ-курӑк ӳсетчӗ. Вара эпӗ мӗнпур вӑй-хала пухрӑм та, пысӑк пӗлӳпе усӑ курса, йывӑҫ ӑшне кӗрсе ҫухалтӑм. Тӗрӗсрех каласан, унпа пӗрлешсе кайрӑм, эсир куракан шӗп-шӗвӗр йӗпсемпе хуплантӑм. Вӗсенче манӑн хуҫӑлнӑ пурнӑҫ, ман куҫҫулӗ, ман курайманлӑх. Пӗлеҫҫӗ тӑшмансем ҫак йӗпсен тутине, ҫавӑнпа ҫывхарма та хӑраҫҫӗ. Ҫавна пула пушхирте пӗртен-пӗр йывӑҫ ларса юлчӗ. Ыттисене тымарӗ-мӗнӗпех кӑкласа ҫисе пӗтерчӗҫ. Хӑвӑрах куратӑр, епле шӑтӑклӑ-путӑклӑ кунти вырӑнсем,— йывӑҫ шӑпланчӗ, кӗске вӑхӑт чӗнмерӗ.— Ӗнтӗ васкӑр тӗкӗрӗр патне,— терӗ вӑл каллех.— Илӗр те хӑвӑртрах кайӑр кунтан. Драконсем выҫӑ, усал, чее.

— Ӑҫта вӗсем? Мӗншӗн пӗри те курӑнмасть? — ыйтрӗ Ванюш, йӗри-тавра пӑхкаласа.

— Ку вырӑнсенче ҫимелли ҫук, ҫавӑнпа вӗсем кунта халӑ сайра хутра ҫеҫ пулаҫҫӗ,— терӗ йывӑҫ.— Анчах нумаях пулмасть виҫҫӗшӗ ҫаврӑнкаласа ҫӳрерӗҫ. Асӑрхануллӑ пулӑр. Ванюш, санӑн ухӑ пур. Татса ил-ха ҫак йӗпсене. Чи вӑрӑммисене, чи шӗвӗррисене суйла. Кирлӗ пулӗҫ. Асту, аллуна ан тирӗнтер.

Йӑванпа Ванюш калаҫакан йывӑҫа чӗререн тав турӗҫ.

— Эпир сана мӗнле те пулин усӑ тума пултаратпӑр-и? — ыйтрӗ Йӑван.

— Пӗр шухӑш кӑна канӑҫ памасть,— чӑшӑлтатрӗ йывӑҫ.— Чикӗ... Вӑл ҫулран-ҫул кивелсе пырать. Ишӗлсе анма пултарать. Инкеке, ӑна мӗнле тумаллине пӗр эпӗ кӑна пӗлетӗп. Каласа, вӗрентсе хӑварма ӗлкӗреймерӗм... Манӑн ҫӳлти турат ҫинче чи вӑрӑм, чи пысӑк йӗп ӳсет. Эпӗ тайӑнӑп, эсир ӑна хуҫса илӗр. Ҫавна

манӑн тӑван халӑх патне ҫитерме пултарсан, эпӗ янташсен пуласлӑхӗшӗн тек пӑшӑрханмӑттӑм.

— Анчах эсир чикӗ урлӑ никам та, нимӗн те каҫаймасть терӗр-ҫке.

— Ҫак йӗпшӗн вӑл чӑрмав пулмӗ.

Кайма пуҫтарӑнса, Ванюшпа Йӑван каласакан йывӑҫ ҫинче ӳсекен шӗвӗркке, вӑрӑм йӗпсене асӑрханса хуҫа-хуҫа илчӗҫ. Унтан сывпуллашрӗҫ те пысӑк чул енне ҫул тытрӗҫ. Нумай кайрӗҫ-и, сахал-и, йӗри-тавра тимлӗн пӑхкаласа пыракан ача сасартӑк тӑпах чарӑнчӗ.

— Такам пур ҫавӑнта,— терӗ вӑл, умри тӗмеске ҫине кӑтартса.— Кармашса пӑхрӗ те пытанчӗ.

— Куртӑм эпӗ те. Эй, кам унта? Мӗншӗн пытантӑр? Тухӑр-ха, курар сире! — кӑшкӑрчӗ Ухмах Йӑван, аллинчи туйине выляткаласа.

Тӗмескесем хыҫӗнчен виҫӗ ҫӗлен тухса тӑчӗ. Мӗн тери тискер, мӗн тери нӗрсӗр иккен вӗсем! Тӑхлан тӗслӗ шатраллӑ кӗлеткисем пӗрене пек пысӑк. Кашнин виҫӗ пуҫ. Кӗске хулӑн урисем ҫирӗп, тӗреклӗ. Ҫынсем ҫине тинкернӗ сивӗ куҫӗсенче ҫӑткӑн хӗрлӗ ҫутӑ ялкӑша-ялкӑша илет.

Ухмах Йӑван пуҫне маттуррӑн ҫӗклерӗ, аллинчи туйине ҫӑмӑллӑн ҫавӑркаласа, тӑшмансен енне темиҫе утӑм турӗ.

— Ну, мӗн кирлӗ? — ыйтрӗ вӑл, драконсем ҫинчен куҫне илмесӗр.— Мӗншӗн ҫула пӳлсе тӑратӑр?

— Ҫиес килет! — терӗ вӗсенчен пӗри хӑйӑлтатакан илемсӗр сасӑпа. Уҫнӑ ҫӑварӗнчен хӗрлӗ ҫулӑм ялкӑшса тухрӗ, сӑмсана йывӑр шӑршӑ пырса перӗнчӗ. Ҫӗлен ҫынсем енне темиҫе утӑм турӗ, ыттисем ун хыҫҫӑн хускалчӗҫ.

— Ҫакна куратӑн-и? — ыйтрӗ юмах паттӑрӗ, туйи ҫине кӑтартса.— Пӗрре кӑна сулса яратӑп. Виҫӗ пуҫу та шакӑрах татӑлса сирпӗнет.

Ҫӗленсем чарӑнчӗҫ, анчах каялла чакмарӗҫ. Выҫӑ куҫӗсем халӗ тискеррӗн йӑлкӑшрӗҫ.

— Туяна варалас килмест сирӗнпе ҫыхланса,— терӗ Йӑван юлхавлӑ сасӑпа.— Малтан эсир манӑн пӗчӗк шӑллӑмпа тытӑҫса

пăхăр. Ун чух курăпăр. Ну, Ванюш, кăтарт-ха çав сĕмсĕрсене хăвăн пултарулăхна...

Тĕллесе пенĕ ухă йĕппи, хаяррăн вăшлатса, малта тăракан çĕлен енне вирхĕнчĕ. Пырса тăрăнса, пĕр мăйне витĕрех шăтарса тухрĕ. Хытă ыраттарчĕ пулас курайманлăхпа тулнă йывăç йĕппи. Тавралăха кисретсе, дракон ахăрса-çухăрса ячĕ, асаплăн нăйкăша-нăйкăша, пĕр вырăнта çаврăнма пуçларĕ. Ӳкрĕ, каллех сиксе тăчĕ, татах ӳкрĕ. Вара, йынăша-йынăша, тĕмескесем хыçне йăва-ланса кайрĕ.

— Маттур, Ванюш! — хаваслăн мухтарĕ ăна Ухмах Йăван.— Чăн-чăн Йăван-паттăр тăванĕ эсĕ... Тата камăн çиес килет пирĕн кучченеçе? Хăшне хăналамалла? Сана-и? Е сана? — туйипе тĕлле-тĕлле ыйтрĕ вăл хăранипе хытса тăнă çĕленсенчен. Пуçĕсене унталла-кунталла пăркаласа, лешсем каялла чакрĕç.

— Кирлĕ мар.

— Апла пулсан, халех тасалăр куç умĕнчен. Ну! Кама каларăм? Хăвăртрах,— урине тапрĕ юмах паттăрĕ.

Драконсем васкасах аяккалла пăрăнчĕç. Кутăн-кутăн чакса, тĕмескесем хыçне кайса лăпчăнчĕç.

Çул тасалчĕ. Телее, Ванюшпа Йăвана урăх пĕр чун та тĕл пулмарĕ. Хаклă тĕкĕр те часах тупăнчĕ. Пысăк чул катăкĕн хărах аякĕ кăштах çĕкленсе тăрать. Шăп çавăнта пĕчĕк лупашкара выртать. Ванман, кивелмен, тусанпа витĕннĕ çеç.

— Ĕнтĕ киле каятпăр,— хаваспанчĕ Ванюш.

— Татах килеççĕ,— терĕ тусем енне пăхса тăракан Йăван.— Лешсем, эпир хăратнисем, пĕлтерчĕç пулас. Хальхинче пилĕк пуçлисем. Иккĕн. Васкасах вĕçеççĕ. Мĕн тума-ши? Тĕкĕр патне пулсан, кая юлчĕç. Кусем пушшех пысăк. Татах та нĕрсĕр. Çуна-чĕсем епле! Ух, вăй! Мĕн тери çил ахăрса тухрĕ. Урараn ӳкес марччĕ. Ванюш, тайăн, ман пек, чул çине. Çирĕп тăр.

Телее, çĕленсем çывăхах вĕçсе пымарĕç. Ванюш кучченеçĕн-чен шикленчĕç пулас. Икçĕр-виççĕр метртра анса ларчĕç те çын-сем умĕнче пуçĕсене тайрĕç.

— Пирĕн чи аслă, чи чаплă, тĕнчере никам çĕнеймн чи вăйлă тăхăр пуçлă дракон сире, Йăван-паттăр тăванĕсене, чĕререн са-

ламлать,— терӗ пӗри.— Хисеплӗ Йăван-паттăр тăванӗсене хăйӗн чи чаплă керменне хăнана чӗнет. Эсир пырасса чăтаймасăр кӗтет,— вунă пуҫ каллех пӗр харăс ҫӗрелле усăнчӗ.

Пит-куҫне кулăшла пăркаласа, Ухмах Йăван ӗнсине кăтăрт-кăтăрт хыҫса илчӗ.

— Пулмасть ҫитесси. Пур ҫӗрте те шăтăк-путăк. Утма вырăн ҫук. Урана хуҫасран хăратпăр. Калăр хăвăрăн чи чаплă, чи,— тем аса илме тăрăшнă евӗр, Йăван каллех пуҫне хыҫса илчӗ,— эх, мур илесшӗ! Астуса юлаймарăм миҫе хутчен чи-чи-чи темеллине!.. Юрӗ-ҫке! Э-э-э... Тăхăр пуҫлă ҫӗлен пире ҫаплах курасшăн ҫунать пулсан, ҫул тутартăр. Хăй кунта килсе пуҫ тайсан тата та лайăхрах. Кайса пӗлтерӗр: сана Ухмах Йăван кӗтет тейӗр.

Драконсем пӗр-пӗрин ҫине пăхса илчӗҫ. Вӗсен куҫӗсем хаяррăн ҫуталчӗҫ те ҫавăнтах пытанса сӳнчӗҫ.

— Тата мӗн хушрӗ сирӗн чи нӗрсӗр... ах, ун пек мар, йăнăшрăм,— терӗ Йăван, ҫӗленсем ҫине пӗр кулмасăр пăхса.— Пӗлейместӗп сирӗн пек калаҫма, ан ҫилленӗр ӗнтӗ... Тата мӗн хушрӗ сирӗн...

— Пирӗн чи аслă, чи чаплă, тӗнчере никам ҫӗнейми чи вăйлă пуҫлăхăмăр,— ҫиллессӗн пӳлчӗ ăна дракон,— ҫавăн пек хаклă хăнасем ун ҫӗршывне мӗн тӗллевпе килнине пӗлесшӗн.

— Иван паттăр тӗкӗрне илме... Леш, эсир ăнсăртран вăрласа килнине...

— Ҫапла, ăнсăртран пулнă вăл, чăннипех ăнсăртран,— Йăван тăрăхланине ăнланман пек пулса, ҫавăнтах килӗшрӗҫ ҫӗленсем.

— Пирӗн чи аслă, чи чаплă, чи хастар тăхăр пуҫлă ҫӗлен ҫав асамлă кӗленчене питӗ хисеплет, чи шанчăклă вырăнта усрать, тутлă апатран ытла хаклать. Апла пулин те, вăл ăна сире, хăйӗн чаплă хăнисене, кăмăлласах парнелӗ,— ҫӗленсем каллех пуҫӗсене тайрӗҫ.

— Суятăр,— терӗ Ванюш, тӗкӗрне кӗсйинчен кăларса.— Акă вăл.

Драконсем каллех пӗр-пӗрин ҫине пăхса илчӗҫ, анчах нимӗн те шарламарӗҫ.

— Ай-яй-яй! — терӗ Йăван, пуҫне сулкаласа.— Икӗ пысăк ҫӗлен

пĕчĕк ачана суйса улталасшăн. Ай-яй-яй!.. Ну, çитет сире пустуй параппан çапма... Тĕрĕссине калăр, мĕн тума килтĕр эсир кунта? Мĕн кирлĕ сире пирĕнтен?

— Тăхăр пуçлă çĕлен пире юри сирĕнпе халаплама, вăхăта тăсма ячĕ,— терĕ халиччен чĕнмесĕр тăнă иккĕмĕш драконĕ.— Кĕçех вăл кунта хăйĕн çарĕпе килсе çитет. Эсир халĕ пирĕн алăра. Йĕри-тавра çавăрăнса пăхăр-ха: пур енче те темиçе пуçлă çĕленсем тăраççĕ. Киле каяс тетĕр пулсан, малтан пире çак чикке уçса парăр. Эпир нумаййăн. Пире хирĕç сирĕн тĕкĕрĕр те нимĕн те тăваймасть.

— Ванюш,— терĕ Йăван,— акă сана ухă йĕппи. Чи вăрăмми, чи шĕвĕрри. Ăнлантăн-и? Тек кĕтме юрамасть. Туртса яр хăвăртрах.

Çакна илтсен, çĕленсем шăп пулчĕç, унтан йăпăр-япăр тĕмескесем хыçне кайса пытанчĕç.

Анчах мĕн пулчĕ-ха Ванюша? Хăрарĕ-ши вăл е ытлашши хумханчĕ — кĕтмен çĕртен унăн ухă тытнă алли чĕтресе кайрĕ. Чикĕ леш енне персе янă пулăшу йĕппи вĕçсе çитеймерĕ, ку енне ӳкрĕ. Çакна курса, ача кĕç-вĕç йĕрсе ямарĕ.

— Эх! — терĕ вăл тарăхса.— Сăмах патăм-çке йывăça. Вăл пире пулăшрĕ, вилĕмрен çăлчĕ. Эпĕ вара!.. Инçе мар вăл! Халех кайса илетĕп.

Йăван ăна кĕпе çаннинчен ярса тытрĕ.

— Вăхăт çук чупса çӳреме,— терĕ вăл çиллессĕн.— Пăх-ха тусем çине. Хуп-хура çумăр пĕлĕчĕ хăпарать...

Пăхрĕ те Ванюш, хăранипе шăмшакĕ сăрăлтатса сивĕнсе кайрĕ. Çук, ку çумăр пĕлĕчĕ мар. Йăван шӳт тăвать. Кусем драконсем. Мĕн чухлĕн вĕсем! Вĕçĕ-хĕрри те курăнмасть. Аякри тӳпене талккишпех хупăрланă. Кунталла килеççĕ. Нумай çунат сулнипе инçетре аслати кĕрлет тейĕн, вĕçĕмсĕр шав тăрать... Ванюш кĕсйинчен тĕкĕрне васкаса кăларчĕ.

— Асамлă тĕкĕр, космос карапĕ туса, пире çĕр çине илсе кай,— пăшăлтатрĕ вăл.

Çав самантрах çутă кĕленче ăшĕнчен виçĕ ялкăш пайăрка сирпĕнсе тухрĕ те çавăрăнма, пĕтĕрĕнме тытăнчĕ. Акă пысăк



çămха евĕр çавра космос карапĕ, хуллен чăшлатса, Ванюшпа Йăван умне пырса ларчĕ. Алăк уçăлчĕ.

— Кĕр,— хулпуççинчен тĕртрĕ Йăван ачана.— Шел, панă сămаха пурнăçлаймарăмăр. Эпĕ айăплă. Каçар, ырă йывăç!

— Тĕкĕрте тепĕр вăй пур,— терĕ Ванюш.

— Юрать! — килĕшрĕ юмах паттăрĕ.— Анчах васка!

Ача йĕри-тавра пăхса илчĕ. Хура пĕлĕт, вилĕм пĕлĕчĕ, хăвăрт сывхарать. Акă планета çийĕн сивĕ çил чупса кайрĕ, тавралăха шăв-шав хупларĕ. Ванюш драконсем ретĕн-ретĕн вĕçнине те, куçĕсенче хаяр çутăсем ялкăша-ялкăша илнине те курать.

— Хăвăртрах! — кăшкăрчĕ Ухмах Йăван карап алăкĕнчен пуçне кăларса.

Ванюш хускалмарĕ. Алă тупанĕ çине хунă пĕчĕк тĕкĕртен çап-çутă пайăркасем йăлкăшса тухрĕç, кивелнĕ чикĕ çийĕн чупрĕç, çӳлелле ыткăнчĕç, аялалла анчĕç, кĕске вăхăт аякка кайса курăнми пулчĕç, вара каялла, тĕкĕр патне тавăрăнса, ĕмĕрлĕхех сӳнчĕç.

— Пулчĕ! Ĕлкĕртĕмĕр! — кулса ячĕ Ванюш.

— Тавтапуç! — янрарĕ хăватлă сасă.

Ача сасă енне çавăрăнса пăхрĕ те, йывăçпа сывпуллашса, аллине сулчĕ.

Ухмах Йăван ăна, çухавинчен ярса тытса, хăвăртрах карапа туртса кĕртрĕ. Алăк самантрах хупăнчĕ. Хумханнă Ванюш пĕчĕк тĕкĕр алăран муклашка çине тухса ӳкнине те, вĕтĕ-вĕтĕ катăк пулса пайланнине те курмарĕ.

Çап-çутă çулăмпа йăлтăртатса çунса, тĕлĕнтермĕш космос карапĕ вырăнтан хускалчĕ. Пуç çийĕнех явăнакан темĕн чухлĕ драконсен ушкăнĕсене сирсе, тӳпенелле вирхĕнчĕ. Сывă пул, аякри планета! Салам сана, юратнă хаклă Çĕр! Салам, ытарайми тăван çĕршывăм!

Космос карапĕ ял хыçĕнчи вăрмана, пысăках мар уçланкăна, анса ларчĕ. Алăк уçăлсанах Ухмах Йăван сиксе тухрĕ те çавăнтах куçран çухалчĕ. Карап пĕрĕнме, пĕчĕкленме пуçларĕ, кĕçех унран йĕр те юлмарĕ. Вăл анса ларнă вырăнта Ахванеç мучин туйи

кăна выртса юлчĕ. Ванюш ăна пĕшкĕнсе илчĕ те килнелле утрĕ. Вăрмантан тухрĕ кăна — хирĕç чупакан юлташĕсене курчĕ.

— Тем анчĕ вăрмана! Те çăлтăр, те çавра çиçĕм! Халĕ кăна,— пĕлтерчĕç вĕсем ăна.

— Нимĕн те çук унта! — хуравларĕ ача. Курни-илтнине вăл Ахванеç мучисĕр пуçне никама та каласа парас темерĕ. Пурĕпĕр ĕненес çук. Суеçĕ тесе ят парĕç тата.

Юмах ăсти хальхинче те урамра тенкел çинче ларать. Ванюш ăна туйине пачĕ, кĕскен мĕн пулнине каласа кăтартрĕ.

— Юрать. Маттур,— мухтарĕ ачана Ахванеç мучи.— Юмаха вĕçлесе килтĕн апла. Халĕ килне кай. Аннӳ тин çеç манран «Ванюша курмарăн-и?» — тесе ыйтрĕ. Тен, пĕр-пĕр ĕç пулĕ...






*Для младшего школьного возраста*

**Зоя Алексеевна Нестерова**

**ПРИКЛЮЧЕНИЯ ВАНЮША**

**Сказка**

**На чувашском языке**

Редактор *П. Е. Димитриев*. Художник *В. П. Авраменко*. Художественный редактор *З. И. Чернова*. Технический редактор *Л. Н. Кондрашкина*. Корректор *Л. А. Иванова*

ИБ 2008. Сдано в набор 11.11.86. Подписано к печати 12.10.87. Формат $84 \times 108^1/_{16}$. Бумага офсетная. Печать офсетная. Гарнитура журнально-рубленая. Усл. печ. л. 5,04. Усл. кр.-отт. 15,78. Уч.-изд. л. 3,2. Тираж 10000 экз. Заказ № 4032. Изд. № 89. Цена 20 коп.

Чувашское книжное издательство, 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4. Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли, 428019, г. Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.





20 пус

ЧĂВАШ
КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ